Библиотека им. М. Горького №

ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

1953 çул Май 4 ТУНТИКУН № 87 (8996). 36-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

Совет Союзĕнчи халăхсем Майăн Пĕрремĕшне—пĕтĕм тĕнчери ĕçсыннисем пĕр кăмăллине кăтартмалли куна, мĕнпур çĕршывсенчи рабочисен тăванлăх кунне савăнăçлăн уявласа ирттерчĕç.

Совет çыннисем хăйсен аслă пĕрлĕхне, хăйсем Коммунистсен партийĕпе Совет Правительстви тавра таччăн пĕтĕçсе тăнине, коммунизм патне шанчăклăн малалла пыма хатĕр тăнине кăтартрĕç.

Совет халăхĕн аслă пĕрлĕхĕ

Майăн 1-мĕшне—пĕтĕм тĕнчери ĕçсыннисем пĕр кăмăллă пулнине кăтартмалли куна, мĕнпур çĕршывсенчи рабочисен тăванлăх кунне совет халăхĕ чаплăн та савăнăçлăн кĕтсе илчĕ. Енер Совет Союзĕнчи ĕçсыннисем хăйсен никам аркатайми пĕрлĕхне, хăйсем тăван Коммунистсен партийĕпе унăн Центральнăй Комитечĕ тавра, тăван Совет правительстви тавра тачă пĕтĕçсе тăнине çĕнĕ вăйпа кăтартса пачĕç.

Пирĕн Тăван çĕршыв столицинче—Мускавра, Хĕрлĕ площадьре, яланхи пекех, Майăн 1-мĕшĕнчи парад тата ĕçсыннисен представителĕсен демонстрацийĕ чаплăн иртрĕç. Кăнтăрла тата каçхине столицăри стадионсенче, площадьсенче, парксенче халăхăн массăллă гуляниййĕсемпе спорт ăмăртăвĕсем пулчĕç. Май уявĕнчи демонстрацисене ĕнер Ленинградра, Киевра, Минскра, Ташкентра, Алма-Атара, Тбилисире, Бакура, Вильнюсра, Кишиневра, Ригăра, Фрунзе хулинче, Сталинабадра, Ереванра, Ашхабадра, Таллинра, Петрозаводскра, пирĕн питех те анлă çĕршывăн мĕнпур хулисемпе районĕсенче ирттерчĕç.

Пирĕн аслă Тăван çĕршыври ĕçсыннисем Майăн 1-мĕшне коммунизмăн мирлĕ строительствине пурнăçласа пынă, çĕршывăн хуçалăхпа культурине аталантарас ĕçре çĕнĕ пысăк çитĕнÿсем туса пынă лару-тăрура уявларĕç.

Совет çыннисем пирĕн промышленноçпа ялхуçалăхĕ тăтăшах ÿссе пынăшăн хавасланса савăнаççĕ. Социализм çĕршывĕнче çĕнĕ фабрикăсем, заводсем, электростанцисем нумай лартаççĕ, халĕ ĕçлекен предприятисене ку чухнехи паха çĕнĕ техникăпа пуянлатаççĕ, пурăнмалли çуртсен, шкулсен, больницăсен, театрсен, библиотекăсен çĕнĕ корпусĕсем ÿсеççĕ. Çĕр кăмракĕ, нефть кунтан-кун нумайрах кăлараççĕ. Металл, станоксем, машинăсем, пир-авăр, атă-пушмак, кĕпе-тумтир, апатçимĕç кунтан-кун ытларах та ытларах туса хатĕрлеççĕ. Совет çыннисем пирĕн çĕршыв коммунизм тăвас çулпа, материальнăй тата культурăллă пуянлăхсене нумайлатас çулпа пынине курса тăраççĕ.

Рабочисен, хресченсен, интеллигенцин—Совет Союзĕнчи мĕнпур ĕçсыннисен пурнăçĕ пĕрмаях лайăхланса пырать. Ĕçсыннисен пурнăçĕ лайăхланни вăрçă хыççăнхи çулсенче апат-çимĕçпе промышленность таварĕсен хакĕсене нумай пулмасть çĕнĕрен,—черечĕпе шутласан, ултăмĕш хут,—нумай йÿнетнинчен лайăх курăнать. Таварсен хакĕсене йÿнетнĕ май рабочисен, хресченсен, интеллигенцин тупăшĕсем чылай ÿсрĕç.

Çак çитĕнÿсем—совет халăхĕ пĕтĕм вăя хурса, питĕ тăрăшса ĕçленин, Коммунистсен партийĕпе Совет правительствин аслă политикине пурнăçласа пынин результачĕ. Çав политикăн тĕп шухăшне Г. М. Маленков, Л. П. Берия, В. М. Молотов юлташсем нумай пулмасть каласа пачĕç. Çав политикăн тĕп шухăшĕ—ĕçсыннисен пурнăçне лайăхлатассишĕн яланах тимлĕ тăрăшасси, халăхăн тĕп интересĕсене, хамăрăн Тăван çĕршывăн хăрушсăрлăхне яланах хытă хÿтĕлесси, социализмла государствăна малалла тĕреклетсе пырасси, пĕтĕм тĕнчери мире сыхласа хăварасси тата тĕреклетесси пулать.

Коммунистсен партийĕпе Совет правительствин политики марксизм-ленинизм теорийĕ çинче, общество аталанăвĕн экономикăлла законĕсене тĕплĕ пĕлни çинче çирĕп никĕсленсе тăрать. Çак политика вăл—пĕртен-пĕр тĕрĕс политика. Вăл обществăн материальнăй пурнăç аталанăвĕн ыйтăвĕсене тĕрĕс палăртать, ĕçсыннисен пурнăçри интересĕсемпе килĕшсе тăрать. Çак политикăна партипе правительство туса хатĕрленĕ, ăна вуншар çулсем хушшинчи кĕрешÿре тĕрĕсленĕ. Çак политикăна халăх интересĕсемшĕн çине тăрса тата яланах пурнăçласа пыраççĕ.

Çак политикăна тытса пырса, партипе правительство юлашки вăхăтра государствăпа хуçалăх руководствине лайăхлатас, халăхăн пурнăç шайне ÿстерес тата совет гражданĕсен никам тĕкĕнме пултарайман прависене хÿтĕлес тĕлĕшпе питĕ кирлĕ чылай ĕçсене туса ирттерчĕç. Халăх хуçалăхне ертсе пырас ĕçе лайăхлатма государствăн центрти аппаратне урăхлатса çĕнетнĕ, амнисти çинчен Указ кăларнă, социализмла законлăхпа йĕркелĕхе малалла тĕреклетсе пырас тĕлĕшпе йышăнмалли мерăсене палăртаççĕ. Партипе правительство рабочи класпа колхоз хресченĕсен союзне, ССР Союзĕнчи халăхсен туслăхне, нумай нацилле Совет государствине пур майсемпе те тĕреклетеççĕ.

Совет халăхĕ партипе правительствăн шалти тата тулашри политикине пĕр шухăшлă пулса ырлать, ăна пурнăçлама пулăшса пырать. Коммунистсен партийĕ, Совет правительстви тата халăх пĕр-пĕринпе тачă çыхăнса тăнинче, çак аслă пĕрлĕхре—пирĕн Тăван çĕршывăн вăйĕ тата никам çĕнтерейми хăвачĕ, коммунизм строительствин задачисене ăнăçлăн пурнăçласа пырас шанăç.

Коммунистсен партийĕ массăсене халăхсем туслă пурăнмалли совет идеологийĕ майлă, пролетарилле интернационализм майлă воспитани парас ĕçе çине тăрса туса пырать. Пролетарилле интернационализм ялавне чун-чĕререн парănса, совет халăхĕ аслă Китай халăхĕпе, халăх демократиллĕ çĕршывсенчи ĕçсыннисемпе, пĕтĕм тĕнчери ĕçсыннисемпе туслă çыхăнусем тытассине, ĕмĕр-ĕмĕрех çирĕп туслă пурăнассине аталантарса тата тĕреклетсе пырать.

Совет Союзĕн примерĕпе хавхаланса, халăх демократи çĕршывĕсенчи ĕçсыннисем çĕнĕ пурнăç тăвас çулпа ăнăçлă пыраççĕ. Китай Халăх республикинче, Польшăра, Чехословакире, Венгрире, Румынире, Болгарире, Албанире, Демократиллĕ Германи Республикинче, Монголи Халăх Республикинче Майăн 1-мĕшĕнчи массăллă демонстрацисем пулса иртрĕç. Çав демонстрацисем халăх демократи çĕршывĕсенчи массăсен политикăлла тата ĕçри хастарлăхĕ хытă ÿснине, вĕсем мир, демократи тата социализм лагерьне—халăхсен чаплă та пысăк çĕнтерĕвне—тĕреклетсе пыма çирĕп шухăш тытнине уççăн кăтартса пачĕç.

Совет государстви мире сыхласа хăварас тата тĕреклетес политикăна, пурнăçра тĕрĕсленнĕ политикăна, пĕрмаях çирĕп тытса пырать, мĕншĕн тесен унăн интересĕсем пĕтĕм тĕнчере мирлĕ пурнăç тăвас ĕçпе тачă çыхăнса тăраççĕ. Совет правительстви мире сыхласа хăварассишĕн тата мире тĕреклетессишĕн тăрать, çĕнĕ вăрçа хирĕç кĕрешет, тĕнчери халăхсем пĕр-пĕринпе килĕштерсе пурăнмалла тăвассишĕн тата мĕнпур çĕршывсем пĕр-пĕринпе ĕçлĕ çыхăнусем тытассине аталантарассишĕн тăрăшать. Çак политика пĕр-пĕрне шанас, тĕнчери çĕршывсем пĕр-пĕринпе тунă договорсене тата килĕшÿсене çирĕппĕн пурнăçласа пырас йĕрке çинче никĕсленсе тăрать. Çак политика вăл—фактсем çине тайăнакан тата фактсемпе çирĕплетекен витĕмлĕ политика.

Совет правительстви: тĕнчери çĕршывсем хушшинче мирлĕн татса пама май килмен ыйтусем çук, тесе шутлать. Вăл урăх правительствăсем тĕнчери çĕршывсем хушшинчи йывăрлăхсене чăннипех пĕтерме май паракан кирек мĕнле ĕçе те ырлама килĕшет. Çакăн чухне Совет правительстви урăх çĕршывсен правительствисем мир пирки каланисене ĕçсемпе, фактсемпе çирĕплетнине курасшăн.

Пирĕн правительствăн тулашри мирлĕ политики совет халăхĕн интересĕсемпе килĕшсе тăрать. Çак уçăмлă тата пĕтĕмпех паллă политикăна мĕнпур çĕршывсенчи миллионшар ĕçсыннисем, пĕтĕм прогрессивлă этемлĕх ырлаççĕ тата хÿтĕлеççĕ.

Совет халăхĕ хăйĕн пуласлăхĕ çине çирĕппĕн шанса пăхать. Вăл Коммунистсен партийĕпе Совет правительствине чун-чĕререн ĕненсе тăрать. Коммунизм строительствин уçăмлă та чаплă программипе, партин XIX-мĕш съезчĕ хатĕрленĕ программăпа хавхаланса, пирĕн çĕршыври ĕçсыннисем паттăр ĕçлеççĕ, халăх хуçалăхне, культурине аталантарса малалла яраççĕ, хамăрăн социализмла государствăна тĕреклетеççĕ тата унăн мухтавне ÿстерсе пыраççĕ.

Ленин—Сталин ялавĕ айĕнче, Коммунистсен партийĕ ертсе пынипе, малалла—коммунизм çĕнтерĕвĕ патне!

(«ПРАВДА» хаçатăн майăн 2-мĕшĕнчи умстатйи).

Май уявĕ ячĕпе Мускаври Хĕрлĕ площадьре пулнă парад тата ĕçсыннисен представителĕсен демонстрацийĕ

Совет халăхĕ, социализмла Тăван çĕршывăн хăватне тĕреклетессишĕн кĕрешсе тунă аслă çĕнтерÿсемпĕн тивĕçлипе савăнса, Майăн Пĕрремĕшĕнче пĕтĕм тĕнчери ĕçсыннисен пĕр шухăшлăх кунĕ ячĕпе, мĕнпур çĕршывсенчи рабочисен туслăх кунĕ ячĕпе хуласемпе ялсенчи урамсемпе площадьсене тухрĕ.

Аслă Совет Союзĕнчи халăхсен туслă çемйи Май уявне Коммунистсен партийĕпе Совет Правительстви тавра таччăн пĕтĕçсе, совет державин хăватне тĕреклетес тĕлĕшпе тата ытларах вăй хурса ĕçлеме хатĕр пулса тухрĕ. Партипе правительствăн аслă политикинче ĕçсыннисем пирĕн Тăван çĕршывăн малашнехи çĕнтерĕвĕсене тумалли шанăçа кураççĕ. Коммунистсен партийĕ совет халăхне паттăр ĕçсем тума хавхалантарать тата организацилет, унăн вăй-хăватне пĕр тĕллев патне, хамăр çĕршывра коммунизм çĕнтересси патне илсе пырать.

Илемлĕ Майăн Пĕрремĕшĕнчи ир Мускавра. Пирĕн Тăван çĕршыв столицинчи обществăлла çуртсемпе пурăнмалли çуртсем çинче хĕрлĕ ялавсем вĕлкĕшеççĕ, пур çĕрте те Совет государствине туса хунă аслă В. И. Ленинпа И. В. Сталин портречĕсем, партипе правительство руководителĕсен портречĕсем. Йывăçсем симĕсленме пуçланă, газонсем çинче малтанхи симĕс курăксем шăтса тухаççĕ.

Çак кун столица ир вăранчĕ. Унăн аслă урамĕсемпе аслă площачĕсене халăх тулнă. Кашни минутран халăх нумайланса пырать. Пур çĕрте те—хула варринче те, хула хĕрринчи вырăнсенче те музыка сасси, ĕçпе мир çинчен калакан юрăсен сасси илтĕнет.

Хĕрлĕ площаде чаплă илемлетнĕ. ГУМ пулнă çурт çинче В. И. Ленинпа И. В. Сталинăн пысăк портречĕсем, вунултă союзлă республикăн гербĕсем. Хĕрлĕ хăмачсем çинче КПСС Центральнăй Комитечĕ Май уявĕ ячĕпе чĕнсе каланă сăмахсем:

— Ленин—Сталин ялавĕ айĕнче, Коммунистсен партийĕ ертсе пынипе, малалла—коммунизм çĕнтерĕвĕ патне!

...Уяв пуçланас вăхăт нумай юлман. Çарсем Хĕрлĕ площадьре йĕркерен тăрса тухнă. Трибунăсем патне КПСС Центральнăй Комитечĕн членĕсем, СССР Верховнăй Совечĕн тата РСФСР Верховнăй Совечĕн депутачĕсем, министрсем, профсоюзсен руководителĕсем, ВЛКСМ Центральнăй Комитечĕн членĕсем, Совет Союзĕн Геройĕсем, Социализмла Ĕç Геройĕсем, производство новаторĕсем, промышленноçри, транспортри, стройкăсенчи, ялхуçалăхĕнчи пысăк ĕç тухăçлăхĕн ăстисем, наукăпа техникăн, культурăпа искусствăн паллă деятелĕсем пыраççĕ.

Хĕрлĕ площадьре хисеплĕ вырăна хăнасем—Май уявне ирттерме Совет Союзне Китай Халăх Республикинчен, ирĕклĕхшĕн кĕрешекен Корейăран, халăх демократи çĕршывĕсенчен килнĕ ĕçсыннисен делегацийĕсем, капитализмла çĕршывсенчен килнĕ культура деятелĕсен делегацийĕсем йышăнаççĕ.

Дипломати корпусĕ валли уйăрнă ложăна часах тулличех пухăнаççĕ.

Хĕрлĕ площаде пухăннисем Мавзолей трибуни çине хăпаракан Г. М. Маленков, Л. П. Берия, В. М. Молотов, К. Е. Ворошилов, Н. С. Хрущев, Л. М. Каганович, А. И. Микоян, М. З. Сабуров, М. Г. Первухин юлташсене, КПСС Центральнăй Комитечĕн секретарĕсене, СССР министрĕсене, Совет Союзĕн Хĕçпăшаллă Вăйĕсен маршалĕсемпе адмиралĕсене тăвăллăн аллă çупса саламлаççĕ.

Кремль сехечĕ 10 çапать. Çар парачĕ пуçланать.

Кремлĕн Спасски башня хапхинчен хурçă тĕслĕ «ЗИС-110» автомобиль тухать. Автомобиль çинче СССР Оборона Министрĕ Совет Союзĕн Маршалĕ Н. А. Булганин тăрса пырать. Ăна хирĕç çавăн пек машина çинчех парад командующийĕ генерал-полковник П. А. Артемьев пырать. Машинăсем площадь варринче чарăнса тăраççĕ.

Генерал-полковник П. А. Артемьев панă рапорта итленĕ хыççăн, Совет Союзĕн Маршалĕ Н. А. Булганин парада тухнă çарсем умĕнчен иртсе пырать, салтаксемпе матроссене, офицерсене, генералсемпе адмиралсене Май уявĕ ячĕпе сывлăх сунса саламлать. Кĕтсе илмелли марш çемми аслати сасси пек кĕрлесе кайнă «урра!» кăшкăрнă сасăпа пĕрлешсе каять.

Глинка çырнă «Славься!» кĕвĕн савăнăçлă сасси маршал çарсене пăхса тухса пĕтерни çинчен пĕлтерет. Фанфарăсем «Пурте итлĕр!» текен сигнал параççĕ. Мавзолей трибуни çине хăпарса, Совет Союзĕн Оборона Министрĕ Совет Союзĕн Маршалĕ Н. А. Булганин сăмах калать.

Совет Союзĕн Маршалĕ Н. А. Булганин каланă сăмах

Юлташсем — салтаксемпе матроссем, сержантсемпе старшинасем!

Юлташсем—офицерсем, генералсем тата адмиралсем!

Совет Союзĕнчи ĕçсыннисем!

Урăх çĕршывсенчен килнĕ пирĕн хаклă хăнасем!

Совет Правительстви тата Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕ ячĕпе сире пĕтĕм тĕнчери ĕçсыннисен уявĕ—Майăн Пĕрремĕшĕ ячĕпе саламласа сывлăх сунатăп.

Пролетариатăн йăлана кĕнĕ çак уявне пирĕн Тăван çĕршыври ĕçсыннисем çĕршывăн хуçалăхпа культура строительствинче тунă çĕнĕ пысăк çитĕнÿсемпе кĕтсе илеççĕ. Хăйĕн тăван Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕ тавра, хăйĕн Правительстви тавра тачăрах пĕтĕçсе тăнă аслă совет халăхĕ коммунизм тумалли çулпа шанчăклăн малалла пырать. Пирĕн государствăн Хĕçпăшаллă Вăйĕсем чаплăран та чаплă строительство программине пурнăçласа пынă чухне пирĕн çĕршыва кĕрешекен совет çыннисен мирлĕ ĕçне шанчăклă хÿтĕлесе пулса тăраççĕ.

Пирĕн нумай нацилле государствăри халăхсен тăванла туслăхĕ çултан-çул тĕрекленет, Совет Союзĕпе халăх демократи çĕршывĕсен хушшинчи тăванла çыхăну пур енĕпе те аталанса тата тĕрекленсе пырать.

Нумаях пулмасть Г. М. Маленков, Л. П. Берия тата В. М. Молотов юлташсем каланисенче Совет Правительствин политикине уççăн кăтартса панă. Çак политикăн пĕлтерĕшĕ халăхсен тĕп интересĕсене тата пирĕн Тăван çĕршывăн хăрушсăрлăхне сыхласси, социализмла государствăна малалла тĕреклетсе пырасси, пĕтĕм тĕнчери мире сыхласа хăвармалла тăвасси пулать.

Çак политикăна тĕп вырăна хурса, Правительство юлашки вăхăтра чылай пысăк ĕçсем туса ирттерчĕ. Çав ĕçсен тĕллевĕ государствăн хуçалăхĕпе ертсе пырассине лайăхлатасси, халăхăн пурнăç шайне хăпартасси тата совет гражданĕсен никам тĕкĕнми прависене сыхласа пулать.

Государствăн центрти аппаратне çĕнĕлле йĕркелерĕç. Çакă вăл халăх хуçалăхне ертсе пырассине лайăхлатать. Амнисти çинчен Указ кăларнă. Социализмла законлăха малалла тĕреклетмелли мерăсем туса хатĕрлеме тытăннă. Апат-çимĕç хакне чылай йÿнетнĕ, куллен кирлĕ промышленность таварĕсен хакне нумай йÿнетнĕ.

Тулашри политикăна илес пулсан, пирĕн Правительство çапла шутлать: ырă кăмăллă пулсан тата ĕç çине тÿрĕ шухăшпа пăхсан, тĕнчери мĕнпур хирĕçÿсене мирлĕ майпа татса пама пулĕччĕ. Çакăн çинчен пирĕн правительство официальнăй йĕркепе пĕлтерчĕ. Эпир мире сыхласа хăварассишĕн тата çирĕплетессишĕн тăратпăр, çĕнĕ вăрçа хатĕрленнине хирĕç кĕрешетпĕр, мĕнпур çĕршывсемпе тытакан ĕçлĕхлĕ çыхăнусене аталантарассишĕн, халăхсем пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлемелле тăвассишĕн кĕрешетпĕр. Пирĕн правительствăн çак политики мирлĕ пурнăçа юратакан мĕнпур халăхсен интересĕсемпе килĕшсе тăрать.

Совет Правительстви ытти государствăсен производствисем тĕнчери лару-тăрăва çăмăллатас тĕлĕшпе тăвакан кирек мĕнле утăма та саламласа йышăнать, вăл çак правительствăсен руководителĕсем хăйсем мирлĕ шухăшлă пулни çинчен пĕлтернисене ĕçпе çирĕплетсе панине курасшăн. Анчах та халлĕхе вĕсем хĕçпăшалланнине чакарни çинчен калакан, вĕсем пур çĕрте те, Европăпа Азири нумай государствăсен территорийĕсенче, уйрăмах Совет Союзĕпе чикĕллĕ территорисенче туса хунă çар базисене чакарни çинчен калакан нимĕнле паллă та çук пирки, пирĕн Правительство хамăрăн Тăван çĕршывăн оборонипе унăн хăрушсăрлăхне çирĕплетес тĕлĕшпе малашне те кирлĕ пек тăрăшĕ, вăл хамăрăн Хĕçпăшаллă Вăйсене тĕреклетме, совет халăхне хăйĕн аслă тĕллевĕ патне—коммунизм патне мирлĕн те çĕнтерÿллĕн пырас ĕçре кансĕрлеме хăтланакан кирек мĕнле тăшманла вăйсене те кирек хăш самантра та сирсе пăрахас тĕлĕшпе хатĕр тăма чĕнет. Çавăнпа та Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕн личнăй составĕн тивĕçĕ—хăйĕн боевой пултарулăхне çине тăрса ÿстерсе пырасси, çарпа политика пĕлĕвĕсене ÿстерессипулать.

Юлташсем!

Эпир, совет çыннисем, малашлăх çине шанчăклăн пăхатпăр. Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕ партипе халăха малалла пымалли, коммунизм тумалли программăпа хĕçпăшаллантарчĕ. Пирĕн партипе правительство туса пыракан ĕçсем Правительство халăх ырлăхĕшĕн ывăнма пĕлмесĕр тăрăшнине кăтартаççĕ, çĕршыв пурнăçне тĕрĕс ертсе пыни çинчен калаççĕ. Пирĕн Тăван çĕршыв хăйĕн вăйĕсем анлăн чечекленнĕ тапхăрта пурăнать. Хамăрăн халăх хуçалăхне, культурăпа наукăна малашне те ывăнма пĕлмесĕр кунтан-кун аталантарса, малалла илсе пырар, хамăрăн социализмла государствăна тĕреклетсе, çĕклентерсе пырар.

Сывă пултăр Майăн Пĕрремĕшĕ—пĕтĕм тĕнчери ĕçсыннисем пĕр кăмăллине кăтартмалли кун, мĕнпур çĕршывсенчи рабочисен тăванлăх кунĕ!

Сывă пултăр паттăр совет халăхĕ тата унăн чаплă Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕ!

Сывă пултăр Совет Правительстви!

Ленин—Сталин ялавĕ айĕнче, Коммунистсен партийĕ ертсе пынипе, малалла—коммунизм çĕнтерĕвĕ патне!

Урра!

* * *

Совет Союзĕн Маршалĕ Н. А. Булганин хăйĕн сăмахне вĕçленĕ хыççăн парада пухăннă çар «урра!» кăшкăрать.

Парад пуçланать. Парада М. В. Фрунзе ячĕпе тăракан Çар Академийĕ пуçласа ярать. Унăн Хĕрлĕ Ялав орденĕн, Ленин орденĕн, Суворов орденĕн лентисемпе илемлетнĕ боевой ялавне Совет Союзĕн Геройĕ подполковник Решетников çĕклесе пырать. Сылтăм тата сулахай енче, йĕнĕсенчен кăларнă хĕççемпе, ассистентсем—Совет Союзĕн Геройĕсем Тюрин тата Белозерцев офицерсем пыраççĕ. Çар Академийĕ хыççăн ытти аслă çар шкулĕсенче вĕренекенсем пыраççĕ.

Çĕр çинчи çарсен парачĕ пуçланнипе пĕр вăхăтрах сывлăшра Хĕрлĕ площадь тĕлĕнчен малтанхи самолетсем вĕçсе иртеççĕ. Çĕр çинчи çарсен парачĕпе пĕрлех сывлăш-çарĕн парачĕ пуçланни авиаци ку чухнехи Хĕçпăшаллă Вăйсен тĕп пайĕ пулса тăнине çирĕплетсе парать.

Реактивлă самолетсен звенисем çиçĕм пек вĕçсе иртеççĕ. Звено хыççăн звено вĕçсе иртнĕ вăхăтра вĕсене кăшт çеç курса юлатăн. Хĕрлĕ площаде пухăннă хăнасем ку чухнехи чаплăран та чаплă сывлăш машинисем тĕлĕнмелле çăмăллăн та хăвăрттăн вĕçсе иртнинчен, вĕсем чаплă та вăйлă пулнинчен, илемлĕ те хăватлă пулнинчен тĕлĕнеççĕ.

Сывлăш парачĕ мĕн пек сасартăк пуçланать, çавăн пекех сасартăк вĕçленет. Сывлăш парадĕнче совет пилочĕсем пысăк пултарулăх кăтартнă.

Пехота чаçĕсем хыççăн СССР Тинĕс-Çар Вăйĕсен чаçĕсем иртме тытăнаççĕ. Вĕсен пуçĕ тата кăвак тĕслĕ ялавĕ çинче илемлĕ кĕтеслĕ хĕрлĕ çăлтăр йăлкăшать. Çар чаçĕсен яланхи симĕсрех хура тумĕсем хушшинче матроссен хура костюмĕсем, кăвак çухависем тата çилпе вĕлкĕшекен лентисем палăраççĕ. Вĕсемпе юнашар—пограничниксем. Вĕсем, матроссем пекех, пĕр-пĕринпе таччăн тăрса çирĕппĕн утса пыраççĕ. Тинĕс-Çар морякĕсемпе чикĕри чаçсен мухтавлă воинĕсем—пирĕн Тăван çĕршывăн тинĕс тата тип çĕр чиккисен сыхă часовойĕсем.

Май уявĕн парадне тухнă сурран колоннăсене нахимовецсем вĕçлеççĕ. Оркестр, М. И. Калинин ячĕпе тăракан Таманск Хĕрлĕ ялавлă, Суворов орденлĕ стрелковăй дивизи çарĕсене вырăн парса, каялла чакать. Площадь урлă бронетранспортерсем иртсе пыраççĕ. Çак мухтава тухнă соединени СССР Хĕçпăшаллă Вăйĕсен стрелковăй чаçĕсен ячĕпе Май уявĕн парадне тухнă.

Май уявĕн парадне вĕçлесе Хĕрлĕ площаде артиллери колонни пырса кĕрет. Тупăсем кăкарнă хăватлă грузовиксем площадь урлă тăватă ретпе иртсе пыраççĕ.

Совет артиллерийĕ парада хăйĕн мухтавлă воинĕсене тăратнă. Çак чаçăн боевой расчетне кĕрекен мĕнпур сержантсемпе салтаксене тенĕ пекех «Отличный артиллерист» значокĕ парса наградăланă. Çак значока боевой тата политикăлла хатĕрленÿ тĕлĕшĕнчен лайăх вĕренекен, хăйсене шанса панă хĕçпăшала ăста вĕренсе çитнĕ воинсене кăна параççĕ.

Хĕрлĕ площадь урлă сурран стройпа тата машинăсемпе совет воинĕсем йышлăн иртрĕç. Çавăн пекех Хĕрлĕ площадь тĕлĕнчен сывлăш флочĕн воинĕсем вĕçсе иртрĕç. Майăн Пĕрремĕшĕнчи парадра вĕсем Совет çĕршывĕн Хĕçпăшаллă Вăйĕсен хăватне кăтартрĕç. Çак вăйсем пирĕн çĕршыв Аслă Октябрьте кĕрешсе илнисене тимлĕн сыхласа тăраççĕ.

* * *

10 сехет те 40 минут. Çар парачĕ вĕçленет. Пĕр самантлăха Хĕрлĕ площадь шăп пулать. Çакăн хыççăн Хĕрлĕ площаде вăйлă хум пек çын сиксе кĕрессĕ... Мускав хулинчи ĕçсыннисен представителĕсен Май уявĕнчи демонстрацийĕ пуçланать.

Яланхи мухтавлă йăлана кĕнĕ тăрах, демонстраци Мускаври чапа тухнă çынсен ушкăнĕ пуçласа ярать. Çак ушкăн Мускав ялавне çĕклесе пырать. Ялав çинче Ленин орденĕ—ĕçре тата кĕрешÿре мухтавлă ĕçсемшĕн паракан аслăран та аслă награда палли.

(Юлашки 2-мĕш страницăра).

ЧĂВАШ АССР-ĕнчи РАЙОНСЕНЧЕ УЙ-ХИРТИ ÇУРХИ ĔÇСЕМ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА

1953 çулхи апрелĕн 30-мĕшĕ тĕлне (процентпа)

Районсем	Çурхи тырăсем акнă	Нумай çул ÿсекен курăксем акнă	Кĕрхи тырăсен калчине удобренисем панă	Курăксене удобренисем панă	Районсем	Çурхи тырăсем акнă	Нумай çул ÿсекен курăксем акнă	Кĕрхи тырăсен калчине удобренисем панă	Курăксене удобренисем панă
Красноармейски	32,8	74,6	82,9	18,3	Çĕрпÿ	14,0	69,5	108,6	76,1
Элĕк	29,3	65,3	33,1	9,3	Шупашкар	13,9	70,2	90,0	57,0
Шăхасан	27,5	108,6	107,5	62,2	Йĕпреç	13,6	79,0	89,9	28,5
Елчĕк	25,0	42,2	33,3	76,4	Çĕмĕрле	13,4	20,8	92,5	17,5
Чурачăк	23,9	85,2	127,0	54,2	Шăмăршă	12,9	38,6	65,8	48,0
Советски	23,3	51,4	82,4	14,0	Сĕнтĕрвăрри	11,2	114,4	67,8	2,7
Калинино	22,9	76,6	64,0	6,4	Первомайски	11,1	54,0	112,0	15,0
Муркаш	20,2	57,9	92,3	6,6	Кувакино	10,3	56,6	62,0	—
Комсомольски	19,4	60,0	104,9	49,0	Октябрьски	10,1	70,7	132,5	10,0
Ишлей	17,9	50,2	146,9	19,7	Вăрмар	8,8	63,3	129,2	63,5
Канаш	17,4	91,1	79,9	15,4	Пăрачкав	8,3	33,0	56,4	6,6
Сĕнтĕр	17,0	100,2	70,8	29,2	Етĕрне	7,6	67,0	100,4	28,3
Вăрнар	16,0	64,4	89,7	24,1	Улатăр	7,6	34,2	41,4	32,6
Хĕрлĕ Чутай	15,3	74,5	70,6	—	Тăвай	7,3	62,7	83,8	32,0
Чкаловски	14,5	32,7	96,6	39,8	Куславкка	6,5	82,1	86,4	17,7

Майăн Пĕрремĕшне Шупашкарта уявлани.

ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: ĕçсыннисен колоннисем Хĕрлĕ площадьре.

Г. ЗИНЬКОВ фотоÿкерчĕкĕсем.

Майăн Пĕрремĕшне Шупашкарта уявлани.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: физкультурниксемпе мотоциклистсен колоннисем Хĕрлĕ площадьре.

Г. ЗИНЬКОВ фотоукерчĕкĕсем.

Май уявĕ ячĕпе Мускаври Хĕрлĕ площадьре пулнă парад тата ĕççыннисен представителĕсен демонстрацийĕ

(Юлашки. Пуçламăшĕ 1-мĕш страницăра).

Фанфарăсем янратса, барабансем çапса Хĕрлĕ площаде пионерсен нумай пинлĕ колонни пырса кĕрет. Çанталăк тата ытларах уçăлса çитет. Сывлăшра ачасен уçă сасси янăраса тăрать. Ачасен аллинче чечек çыххисем. Вĕсем ĕççыннисен генийлĕ сулпуçĕсем В. И. Ленинпа И. В. Сталинăн портречĕсене çӳлте тытса пыраççĕ.

Колоннăран пионерсен пĕр ушкăнĕ уйрăлать. Вĕсем Мавзолей трибуни çине чупса хăпараççĕ те партипе правительство руководителĕсене чечек çыххисем пама ççĕ.

Чи çамрăк демонстрантсем хыççăн Хĕрлĕ площаде физкультурниксем пырса кĕреççĕ. Площадь урлă пиншер çамрăксем, Ленин—Сталинăн аслă ĕçĕн çĕнтерĕвĕшĕн кĕрешсе ӳснĕ хăюллă та çирĕп çамрăксем, наукăна, техникăна, культурăна вĕренсе алла илекен çамрăксем иртсе пыраççĕ.

Площаде ĕçре çирĕпленнĕ Мускав çыннисем пырса кĕреççĕ... Ăçта пăхатăн унта хĕрлĕ хăмачсем, тĕрлĕ тĕслĕ чечексем. Демонстрантсем умĕнче пĕр вăхăтрах 1.200 ялав вĕлкĕшсе пырать. Кировски, Ленински, Краснопресненски, Советски, Первомайски, Куйбышевски, Красногвардейски, Молотовски тата ытти районсен эмблемисем курăнаççĕ.

Мавзолей умĕнчен Мускав металлургĕсемпе текстильщикĕсем, станкостроительсемпе чугун çул работникĕсем, ученăйсемпе искусство деятелĕсем иртсе пыраççĕ. Тĕрлĕ професси представителĕсем, ватăсемпе çамрăксем иртсе пыраççĕ. Вĕсем пурте хамăрăн социализмла Тăван çĕршыва чĕререн юратса пĕрлешнĕ. Вĕсем ĕç фронтĕнче тунă çитĕнӳсем çинчен рапортсем параççĕ.

Площадь тăрăх столицăри малта пыракан предприятисен коллективĕсен представителĕсем иртсе пыраççĕ. Çак предприятисем туса кăларакан продукци пĕтĕм çĕршывра паллă. Сталин ячĕпе тăракан автомобиль заводĕнчи, Киров ячĕпе тăракан, Владимир Ильич ячĕпе тăракан заводсенчи, Каганович ячĕпе тăракан подшипниксем тăвакан заводри тата ытти нумай предприятисенчи рабочисемпе служащисем иртсе пыраççĕ. Ĕçри çĕнтерӳ çинчен, пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх плана тултарассишĕн тата ирттерсе тултарассишĕн социализмла ăмăрту анлăн сарăлни çинчен калакан çĕнĕрен те çĕнĕ рапортсем. Мускав çыннисем, пĕтĕм совет халăхĕ пекех, Майăн Пĕрремĕшне хамăрăн юратнă Тăван çĕршывăн вăйĕпе хăвачĕшĕн мăнаçлă пулнипе уявлаççĕ.

Демонстрантсем хушшинче — Мускав строителĕсем. Пирĕн Тăван çĕршыв столици кунтан-кун илемленсе, лайăхланса пырать. Çӳлĕ çуртсем тума тытăннăранпа темиçе çул кăна иртнĕ-ха. Апла пулсан та халех ĕнтĕ чылай инçетрен Мускаври çӳлĕ çуртсен шпилĕсем курăнса тăраççĕ. Нумай хутлă çĕнĕ çуртсем, шкулсем, клубсем тĕлĕнмелле хăвăрт ӳссе çитĕнеççĕ. Çĕнĕ урамсем пулса тăраççĕ. Мускав хăйĕн иртнĕ 800 çул хушшинчи историйĕнче хальхи пек вăйлă строительство пулнине нихçан та курман.

Трибуна çинчен Мускав метрополитенне тăвакансене ăшшăн саламлаççĕ. Метро поезчĕсем куллен икĕ миллион çын ытла турттараççĕ. Нумаях пулмасть метро тăвакансем тата тепĕр чаплă çĕнтерӳ турĕç — Арбат тăрăхĕнче çĕнĕ лини туса пĕтерчĕç.

Совет çыннисен материальнăй пурнăçĕ султан-çул лайăхланса пырать. Куллен кирлĕ мĕнпур таварсен хакĕсене тăтăшах йӳнетсе пыни партипе правительство совет халăхĕшĕн тăрăшнине кăтартать.

Студентсем, шкулсемпе аслă шкулсенче вĕрентекен преподавательсем, литературăпа искусство деятелĕсем Совет Союзĕнче халăха вĕрентес ĕçпе культура нихçан пулман пултарулăхпа вăйланса пыни çинчен калакан плакатсемпе транспарантсем йăтса пыраççĕ. Пирĕн Тăван çĕршыври мĕнпур республикăсенче пурте хут пĕлекен пулса тăчĕç. Совет Союзĕнче 57 миллион çын вĕренет. Революциччен Российăра аслă шкулсем пурĕ те 96 кăна пулнă, вĕсенче 117 пин çын вĕреннĕ. Совет Союзĕнче хальхи вăхăтра 890 аслă шкул шутланать, 1,5 миллион çынна яхăн вĕренет.

Май уявĕнчи демонстраци совет çыннисем хăйсен социализмла Тăван çĕршывĕн, халăхсен мирпе хăрушсăрлăхĕн тĕрекĕн хăватне çирĕплетессишĕн кĕрешме яланах хатĕр тăнине тата тепĕр хут кăтартса пачĕ. Щитсемпе транспарантсем çинче — КПСС Центральнăй Комитечĕ чĕнсе каланă сăмахсем:

— Сывă пултăр халăхсем хушшинчи мир!

Интересленекен çĕршывсем пĕр-пĕринпе каласса татăлнă тăрăх мирлĕ йĕркепе татса пама май килмен е татса парайман тавлашуллă ыйту çук!

— Англири, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенчи тата Совет Союзĕнчи халăхсен вăрçа сирсе ярассишĕн, пĕтĕм тĕнчере çирĕп мир туса хурассишĕн кĕрешес ĕçри туслăхĕ сывă пултăр!

Çакăн пек лозунгсем чылай курма пулать.

Совет Союзĕнчи ĕççыннисем пролетарилле интернационализм туйăмне чĕрере тытса Май уявĕн кунĕ миршĕн, демократишĕн, социализмшăн кĕрешекен мĕнпур халăхсене тăванла салам яраççĕ. Совет Союзĕн мирлĕ политики ытти çĕршывсенчи мĕнпур халăхсен прависене хисеплесси çинче, тĕнчери нормăсене тытса пырасси çинче никĕсленсе тăрать.

Демонстрантсем аслă Китай халăхне, халăхăн демократиллĕ хăватлă Китай государствине тăвас ĕçре çĕнĕ çитĕнӳсем тунă халăха, сывлăх сунаççĕ.

Нумай транспарантсем çине социализм ăнăçлă тăвакан халăх демократи çĕршывĕсенчи ĕççыннисене тăванла салам кала са çырнă сăмахсем. Халăх демократи çĕршывĕсемпе Совет Союзĕ хушшинчи туслăх никам сĕмĕрейми çирĕп.

Совет çыннисем паттăр Корея халăхне, хăйĕн Тăван çĕршывĕн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн кĕрешекен халăха, чĕререн саламлаççĕ. Вĕсем хăвăртрах мирлĕ договор тăвассишĕн, пĕрлĕхлĕ, никама пăхăнман, мире юратакан демократиллĕ Германишĕн кĕрешекен Германи халăхне салам яраççĕ.

Плакатсем çинче КПСС Центральнăй Комитечĕ Май уявĕ ячĕпе нациилле ирĕклĕх туса хурассишĕн, никама пăхăнман, демократиллĕ тата мире юратакан Японишĕн паттăр кĕрешекен Япони халăхне чĕнсе каланă сăмахсем, колониллĕ çĕршывсемпе пăхăнса тăракан çĕршывсенчи халăхсене, империализм пусмăрне хирĕç, хăйсен ирĕклĕхĕпе нациилле никама пăхăнманлăхĕшĕн кĕрешекен халăхсене саламласа каланă сăмахсем.

Совет Союзĕнчи халăхсем тĕнчери рабочисен юхăмĕн паллă деятелĕсене чĕререн хисеплеççĕ. Демонстрантсем тăванла коммунистсен партийĕсемпе рабочисен партийĕсен руководителĕсен портречĕсене, тĕнчери рабочисен движенийĕн паллă деятелĕсен портречĕсене çĕклесе пыраççĕ.

Мускав çыннисен Майăн Пĕрремĕшĕнчи манифестацийĕ вĕçленсе пырать. Хĕрлĕ площаде каллех физкультурниксем тухаççĕ. Спортсменсем Мавзолей умĕнчен харăс утса иртсе пыраççĕ. Вĕсем чечексенчен çыхса тунă боевой чĕнӳ сăмахĕсене пĕлтерекен лозунг илсе пыраççĕ: «Малалла, коммунизм çĕнтерĕвĕ патне!» тет вăл лозунг.

Мускав хулинчи ĕççыннисем, социализмла аслă державăри мĕнпур ĕççыннисем пекех, Майăн Пĕрремĕш кунĕ пĕтĕм тĕнче умĕнче тата тепĕр хут хăйсем пĕрлĕхлĕ пулнине, Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕпе Совет Правительстви тавра таччăн пĕтĕçсе тăнине, малалла, пирĕн çĕршывра коммунизм тумалли аслă ĕç пĕтĕмпех çĕнтерессипатне пымалли çулпа малалла пыма хатĕр тăнине кăтартса пачĕç.

* * *

Майăн Пĕрремĕшĕнче каçхине столицăри площадьсенче, урамсенче, парксенче халăх савăннă. Унта пиншер çын пулнă.

Каçхине 10 сехетре уяв ячĕпе артиллери салючĕ пулнă. (ТАСС).

Уяв ячĕпе

ХАРЬКОВ. Харьковри Орджоникидзе ячĕпе тăракан трактор заводĕн цехĕсенче савăнăçлă хыпар сарăлнă: пĕрремĕш кварталта ăнăçлă ĕçленĕшĕн предприяти коллективне СССР Министрĕсен Совечĕн Хĕрлĕ ялавне памалла тунă. Завод коллективĕ тăватă уйăхри задание апрелĕн 28-мĕшĕнче тултарнă. Кăçал завод, иртнĕ çулхипе танлаштарсан, продукци 18,5 процент ытларах туса кăларать. Ĕç тухăçлăхне ӳстерсе тата продукцийĕн хăйне ларакан хакне йӳнетсе, 2 миллион тенкĕ ытла перекетлесе хăварнă.

КАРАГАНДА. Карагандари шахтерсем Майăн 1-мĕшĕнчи уява ĕçри çĕнĕ çитĕнӳсемпе кĕтсе илнĕ. «Ленинуголь» трест бассейнра чи малтан тăватă уйăхри производство планне тултарнă. Трестри шахтăсем 2 миллион тенкĕ ытла перекетлесе хăварнă.

НОВОСИБИРСК. Кăçал хулари ĕççыннисем валли 135 пин тăваткал метр чухлĕ пурăнмалли çуртсем туса пĕтереççĕ. Юлашки тăватă уйăх хушшинче строительсем, иртнĕ çулхи çав вăхăтрипе танлаштарсан, 5 пин тăваткал метр нумайрах пурăнмалли çуртсем туса пĕтернĕ.

Каменщиксен, штукатурсен, платниксемпе малярсен çĕршер бригади стахановла вахтăна тăрса ĕçлеççĕ. Нумай рабочисем ĕç нормине 1,5 хут тата ытларах та тултарса пыраççĕ.

АЛМА-АТА. Алма-Атари литейно-механически завод коллективĕ пилĕк уйăхри плана срокчен тултарнă.

Май уявĕ умĕнхи стахановла вахтăна тăнă хыççăн новаторсен сĕнĕвĕсене пурнăçланă. Ясиновский конструкторпа Карпенко механик литейнăй цехра тимĕр листисене хурас ĕçе механизациленĕ. Çапла вара ĕç тухăçлăхĕ пилĕк хут ӳснĕ. Саламов токарь сĕнĕвне пурнăçласа, кашни детале тума 5 килограмм сахалтарах металл расходлама пуçланă.

КРИВОЙ РОГ. «Ленинруда» трестри горнякĕсем Майăн 1-мĕшĕ ячĕпе парне хатĕрленĕ. Вĕсем тăватă уйăхри производство планне срокчен тултарса çитернĕ.

(ТАСС).

Пилĕк çул нормине тултарнă

ЛЕНИНГРАД. С. М. Киров ячĕпе тăракан «Электросила» заводра И. Писарев слесаре пурте пĕлеççĕ. Вăл çĕнĕ çул пуçланнăранпа пĕр çулталăк нормине тултарнă. Паллă стахановец пиллĕкмĕш пилĕкçуллăх пуçланнăранпа тăхăр çул нормине тултарса çитернĕ.

Писарев юлташран пример илсе, заводри çĕршер рабочисем ĕç тухăçлăхне ӳстермелли майсем шыраса тупаççĕ, пилĕкçуллăх нормăна срокчен пурнăçлассишĕн ăмăртса ĕçлеççĕ. Заводри 250 стахановец ытла пилĕкçуллăх нормăсене тултарнă.

(ТАСС).

Вĕрентӳпе воспитани ĕçне — çӳлĕ пусăма!

Вĕренӳ çулĕ вĕçленесси çывхарса килет. Халĕ шкулсенчи учительсен тата вĕренекенсен коллективĕсем экзамена лайăх хатĕрленес шухăш-ĕмĕтпе пурăнаççĕ.

Экзамена хатĕрленес тата вĕренӳ çулне ăнăçлă вĕçлес ыйтупа çак кунсенче Шупашкарта республикăри вăтам шкулсен директорĕсен, районсемпе хуласенчи халăха вĕрентес ĕç пайĕсен заведующийĕсемпе инспекторĕсен канашлăвĕ пулчĕ. Канашлу çӳлте асăннă ыйтупа Чăваш АССР Çутĕç министрĕ А. Токарев юлташ тунă доклада сӳтсе яврĕ.

Докладчик тата прение тухса калакансем кăçалхи вĕренӳ çулĕнче вĕрентӳпе воспитани ĕçĕ малалла лайăхланса пынине палăртрĕç. Партин XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсемпе хавхаланнă учительсен ĕçри хастарлăхĕ нумай ӳсрĕ. Съезд панă кăтартусене пурнăçласа пынă май, республикăри нумай шкулсенче уроксене идейăпа политика тĕлĕшĕнчен çӳлĕ пусăмра ирттерме пуçларĕç. Малта пыракан шкулсенче политехникăлла вĕренĕве куçма хатĕрленес енĕпе чылай ĕçлеççĕ. Шупашкарти иккĕмĕшпе вуннĕрĕмĕш шкулсенче, Сĕнтĕрвăрринчи вăтам шкулта, Чкаловски районĕнчи Тури Туçари вăтам шкулта техника кружокĕсен ĕçĕсене лайăх йĕркеленĕ, лабораторисенче опытсем нумай тăваççĕ, предприятисенчи машинăсемпе паллаштарма экскурсисем ирттереççĕ, чылай шкулсем çумĕнчи участоксенче ĕçсене аван йĕркелеççĕ, вĕренекенсене практикăлла ĕçсем тума хăнăхтараççĕ.

Шупашкарти чылай шкулсенче, Сĕнтĕрвăрринчи, Сявăри, Вăрнарти вăтам шкулсенче вĕрентӳпе воспитани ĕçĕ лайăхланчĕ, вĕренӳре ĕлкĕрсе пырайманнисен шучĕ чакрĕ. Ку шкулсенче вĕренӳ ĕçĕ ăнăçлă пулса пыни учительсем кашни урока ирттерме лайăх хатĕрленнинчен, активлă методсемпе ĕçленинчен, наглядлăй пособисемпе анлă усă курнинчен килет.

Çав вăхăтрах Красноармейскинчи, Октябрьскинчи, Пăрачкаври, Хĕрлĕ Чутайри вăтам шкулсенче кашни виçĕ ачаран е тăватă ачаран пĕри вĕренӳре ĕлкĕрсе пыраймасть. Çак тĕслĕхрен уйрăм шкулсенчи учительсен коллективĕсем пĕтĕм ответлăха туйса ĕçлеменни курăнать.

Докладчик экзаменсем ирттермелли вăхăт çывхарса килни, вĕрентӳпе воспитани ĕçĕнчи çитменлĕхсене хăвăртрах пĕтермелли, шкул руководителĕсем учительсенчен ытларах ыйтмалли çинчен каларĕ. Вăл пуçламăш шкулсенче, I—IV-мĕш классенче вĕренӳ çулне лайăх вĕçлес ыйтусем çинче уйрăмах чарăнса тăчĕ. Вĕренӳ çулĕн малтанхи çурçулĕнче 1.438 пуçламăш (I—IV-мĕш) классенче пур ачасем те вĕренӳре ĕлкĕрсе пынă. Çапах та уйрăм шкулсенче пуçламăш классенчи ачасем хушшинче те вĕренӳре ĕлкĕрсе пырайманнисем пур. Вĕренӳ çулĕ пĕтиччен юлнă вăхăтра учительсен ĕлкĕрсе пырайман ачасене ытларах пулăшмалла, вĕсене тепĕр класа куçма кирлĕ таран пĕлӳ пама тăрăшмалла.

Пĕрремĕш, иккĕмĕш тата виççĕмĕш классенче вĕренекенсене çулталăк тăршшĕнче мĕнле вĕренни, мĕнле паллăсем илнине кура тепĕр класа куçараççĕ. Тăваттăмĕш классенче вара экзаменсем пулаççĕ. Çавăнпа та хальхи вăхăтра тăваттăмĕш классенче уйрăмах тимлĕ ĕçлемелле.

Асăннă классенче вĕренекенсене халиччен вĕреннĕ материалсенчен чи кирлисене аса илтермелле. Çак ĕçе программăсен, учебниксем тăрăх туса пымалла. Вырăс чĕлхипе чăваш чĕлхи учителĕсем, И. В. Сталин чĕлхе вĕрентĕвĕ пирки панă кăтартусене никĕсе хурса, вĕрентӳ ĕçне тăтăшах лайăхлатса пыма тивĕçлĕ. Вĕсен ачасене грамматика правилисене тĕплĕн вĕрентес пулать.

Физика, хими тата математика ку чухнехи техникăн теориллĕ никĕсĕ пулса тăраççĕ. Кăçалхи вĕренӳ çулĕнче çак предметсене вĕрентес ĕç пăртак лайăхланчĕ. Тури Туçари (Чкаловски районĕ) вăтам шкулта физика вĕрентекен учитель Н. Салмин, Нăрваш Шăхальри (Первомайски районĕ) вăтам шкулти И. Исаев юлташсем ачасемпе пĕрле физика приборĕсем тата пособисем туса хатĕрленĕ, уроксенче ачасене сăнавсем нумай тутарнă, çапла майпа вĕсене практикăлла ĕçе хăнăхтарса пынă. Физика тата хими енĕпе вĕренекенсене машинăсемпе, практикăлла ĕçсемпе паллаштарни пысăк усă парать.

Математика вĕрентекен учительсенчен хăшпĕрисем геометри вĕрентнĕ чухне ачасене çĕр висме, логарифма линейкипе усă курма хăнăхтараççĕ. Физика учителĕсем ачасене фабрикăсемпе заводсене экскурсие илсе кайса, машинăсемпе паллаштараççĕ. Анчах çак предметсене вĕрентес ĕçре çитменлĕхсем те сахал мар. Ачасем задачăсене тĕплĕн ăнланса илмесĕр шутлани, хăйсем мĕн вĕреннипе практикăра усă курма хăнăхса пыманни, задачăна мĕнле шутламаллине тĕплĕн ăнлантарса пама пĕлменни, — çаксем тĕп çитменлĕхсем пулаççĕ. Тĕрлĕ фигурăсен чертежĕсене тусан, вĕсене ăнлантарса паракан текстсене çырма пĕлменнишĕн ачасен ĕçĕсене аван паллă лартса пама май килмест. Çакăн пек çитменлĕхсемшĕн чи малтан учитель айăплă, унăн ачасене задачăсене шутлама та, вĕсене мĕнле шутласа кăлармалли çинчен тĕплĕн ăнлантарса пама та вĕрентес пулать.

Биологипе те, зоологипе те экзамена лайăх хатĕрленмелле. Ачасен теориллĕ пĕлĕвĕсене çирĕплетме вĕсене опыт тумалли участоксенче ĕçлеме анлăн хутшăнтармалла.

Ачасене идейăпа политика тĕлĕшĕнчен воспитани пама СССР историйĕпе Конституци вĕрентес ĕçе лайăх йĕркелени кирлĕ. Кăçал чылай шкулсенче çак предметсемпе ачасене тĕплĕнрех вĕрентеççĕ. Ишлей районĕнчи Мамăшпа Тăрăнри çичĕ çул вĕренмелли шкулсенче ку предметсемпе ĕлкĕрсе пырайманнисем çук.

Экзамена хатĕрленнĕ май историпе СССР Конституцине вĕрентекен учительсем умĕнче пысăк та ответлă задачăсем тăраççĕ. Вĕсен хăйсен предмечĕсемпе вĕрентнĕ, халиччен мĕн вĕреннине аса илтернĕ чухне партин XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсем тата съездра Сталин каланă сăмах çинчен тĕплĕн ăнлантарса парас пулать. Конституци вĕрентнĕ чухне СССР Верховнăй Совечĕн кăçалхи март уйăхĕнче пулнă тăваттăмĕш сессийĕ йышăннă законсемпе тата постановленисемпе паллаштармалла. X-мĕш классенче вĕренекенсем историпе экзамен пама мĕнле хатĕрленсе çитнине шкул директорĕсем хăйсем тĕрĕслесе тăма тивĕçлĕ.

Канашлура тухса калакансем экзамена хатĕрленес тĕлĕшпе организацилле-техникăлла ĕçсем мĕнле пыни çинчен те пĕлтерчĕç, ĕçри çитменлĕхсене палăртрĕç. Сăмахран, Комсомольски районĕнчи шкулсене экзамен билечĕсем сахал ярса панă, хăшпĕр шкулсенче ятарласа экзамена хатĕрленмелли кабинетсем туман, дежурнăй учительсене уйăрман. Уйрăм районсенче экзамен ирттерес тĕлĕшпе ĕçлекен комиссисене халиччен те туман.

Канашлура пулнисем экзамена хатĕрленес ĕçе республикăри шкулсенче тĕпренех вăйлатма кирлине палăртрĕç.

Майăн Пĕрремĕшне уявлани

Шупашкар

Пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисен уявне — Майăн 1-мĕшне Шупашкарти фабрикăсемпе заводсенче, учрежденисемпе организацисенче ĕçлекенсем, шкулсенче вĕренекенсем хаваслăн кĕтсе илчĕç. Май уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, чылай предприятисен коллективĕсем тăватă уйăхри производство планне срокчен ирттерсе тултарчĕç. Пирĕн ĕççыннисем Ленин — Сталин партийĕ ертсе пынипе юратнă Тăван çĕршыв вăй-хăватне татах та ытларах ӳстерессишĕн, коммунизм çĕнтерĕвĕшĕн хастарлă кĕрешнине тепĕр хут кăтартса пачĕç.

Республика столици — Шупашкар хули уяв умĕнхи кунсенчех праçник тумĕпе капăрланма тытăнчĕ. Учрежденисемпе организацисен çурчĕсем, предприятисен корпусĕсем çинче КПСС Центральнăй Комитечĕ уяв ячĕпе чĕнсе каланă лозунгсем, партипе правительство руководителĕсен портречĕсем. Инçетренех илемлĕ курăнать пир-авăр комбиначĕн пысăк корпусĕ. Ăçта пăхнă унта лозунгсем, плакатсем, транспарантсем, хĕрлĕ ялавсем.

Майăн 1-мĕшĕ. Ĕççыннисем ирех демонстрацие хатĕрленме тытăнчĕç. Рабочисем, служащисем, вĕренекенсем хăйсен колоннисем пухăнакан вырăнсене васкаççĕ. Хулари вăтам шкулсенче вĕренекен хĕрачасенчен нумайăшĕ чечек çыххисем тытса пыраççĕ. Суркуннехи телейлĕ те савăнăçлă праçник. Çамрăклăх праçникĕ! Пур çĕрте те юрă юрлани, музыка кĕвви илтĕнет. Хула урамĕсемпе площачĕсенче халăх нихçанхинчен те нумай. Колоннăсем пĕрин хыççăн тепри Хĕрлĕ площадь çывăхĕнчи урамсене пухăнаççĕ.

Вуннăр сехет. Трибуна çине КПСС обкомĕн секретарĕсем Т. А. Ахазов, С. М. Ислюков, Н. А. Шмаков юлташсем, Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕ И. А. Афанасьев юлташ, Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ З. А. Андреева юлташ, КПСС хула комитечĕн секретарĕсем Н. Н. Никитин, Л. Х. Михайлов, А. П. Швечков юлташсем, хула Совет исполкомĕн председателĕ Н. П. Енчиков юлташ, Чăвашоблпрофсовет председателĕ М. М. Романова юлташ, ВЛКСМ Чăваш обкомĕн секретарĕ А. И. Иванов юлташ, СССР, РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совет депутачĕсем, министрсем, литературăпа искусство деятелĕсем, стахановецсемпе стахановкăсем, республикăри паллă çынсем хăпараççĕ.

Вуннăр сехетре хулари ĕççыннисен демонстрацийĕ пуçланчĕ. Чи малтан площаде Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ завод коллективĕ пырса кĕрет. Колонна умĕнче хĕрлĕ ялавсем çĕклесе пыраççĕ. Халăх уявĕсене ĕçри çитĕнӳсемпе кĕтсе илесси тахçанах завод коллективĕн йăлине кĕнĕ. СССР Электростанцисен тата электропромышленность министерствине пăхăнса тăракан предприятисен кăçалхи пĕрремĕш кварталти ĕç итогĕсем тăрăх завод пĕрремĕш вырăна тухрĕ, СССР Министрĕсен Совечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне илме тивĕçлĕ пулчĕ. Чаплă коллектив, çавăн пекех, Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе Чăвашоблпрофсоветăн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне илчĕ. Предприяти туса кăларакан продукцие Мускаври метрополитенра ĕçлекенсем тата ытти вырăнсенче те мухтаса асăнаççĕ. Заводри паллă стахановецсемпе стахановкăсене — Мищенко, Королев, Крупенко, Кириллов, Поляков, Ефимов, Никитина тата ытти юлташсене хамăр республикăра çеç мар, республикă тулашĕнче те лайăх пĕлеççĕ.

Завод колонни хыççăн Хĕрлĕ площаде вĕренекенсен колоннисем пырса кĕчĕç. Колоннăсем çинче ялавсем вĕлкĕшеççĕ. Ачасем телейлĕ те савăнăçлă пурнăçшăн Коммунистсен партийĕпе Совет правительствине тав тăваççĕ.

Партипе правительство куллен тăрăшнипе пирĕн Шупашкар хули тĕпренех улшăнчĕ. Хулара промышленность предприятийĕсен шучĕ ӳссех пырать. Акă, площадь тăрăх пир-авăр комбиначĕн строителĕсем иртсе пыраççĕ. Вĕсем кăçалхи строительствăпа монтаж ĕçĕсен планне декабрĕн 21-мĕшĕ тĕлне тултарма пулнă. Обязательствăна пурнăçлассишĕн строительсем социализмла ăмăртăва вăйлатсах пыраççĕ. Пир-авăр комбиначĕн строителĕсем хыççăнах Хĕрлĕ площаде ĕçлеме пуçланă комбинатри рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем тата служащисем пырса кĕреççĕ. Вĕсем аслă уява ĕçри чаплă çитĕнӳсемпе кĕтсе илнĕ.

Пир-авăр фабрики, пир-авăр техникумĕ, чĕлха фабрики... Колонна хыççăн колонна иртет. Совет учрежденийĕсенче ĕçлекенсен колонни хыççăнах площаде Чăвашсен ялхуçалăх институтĕнче вĕренекен студентсем, преподавательсемпе профессорсем пырса кĕреççĕ. Ялхуçалăх институчĕ социализмла ялхуçалăхне специалистсем — ученăй агрономсемпе зоотехниксем хатĕрлесе парать. Çак институтран вĕренсе тухнă специалистсем социализмла ялхуçалăхĕнчи çĕнĕ çитĕнӳсемшĕн, ялхуçалăхĕ умĕнче çĕнĕ пилĕкçуллăхра тăракан задачăсене ăнăçлă пурнăçлассишĕн ывăнма пĕлмесĕр кĕрешеççĕ.

Совет государстви халăха вĕрентес ĕç валли çулленех укçа-тенкĕ нумай расходлать. Пирĕн çĕршывра çамрăксене вĕренме лайăх условисем туса панă. Шкулсен шучĕ ӳссех пырать. Партин XIX-мĕш съезчĕ халăха вĕрентес ĕç енĕпе татах та чаплăрах ӳсĕмсем тумаллине кăтартса пачĕ. Чăвашсен педагогика институтĕнче пирĕн шкулсенче ĕçлеме чаплă кадрсем пăхса ӳстереççĕ. Институтра вĕренекенсем, преподавательсемпе служащисем уяври демонстрацие пĕр çын пек пулса хутшăнчĕç.

Площадь тăрăх искусство работникĕсем, финанс органĕсенче ĕçлекенсем, коммунальнăй предприятисенче ĕçлекенсем иртеççĕ.

Шупашкарта нумай тĕрлĕ промышленность предприятийĕсем ĕçлеççĕ. Вырăнти промышленность предприятийĕсемпе апатçимĕç промышленность предприятийĕсен коллективĕсем те уяв умĕнхи кунсенче пысăк çĕкленӳпе ĕçлерĕç. Çак предприятисен коллективĕсем уяври демонстрацие малашне тата лайăхрах ĕçлес туйăмпа тухнă. Площадь тăрăх совет суту-илĕвĕн работникĕсем, медицина учрежденийĕсенче ĕçлекенсем, сыхăну предприятийĕсен работникĕсем иртсе пыраççĕ.

Май уявĕ ячĕпе ирттернĕ демонстрацие хулари физкультурниксем — велосипедистсемпе мотоциклистсем вĕçлерĕç.

Демонстрацие пĕр çын пек хутшăнса, хулари ĕççыннисем партипе правительствăна чунтан-чĕререн юратнине тата тепĕр хут кăтартса пачĕç.

Улатăр

Уяв кунĕсенче хула нихçанхинчен хитререх курăнать. Çуртсем çинче хĕрлĕ ялавсем вĕлкĕшеççĕ.

Кăнтăрла 11 сехет тĕлне темиçе пин çын Иосиф Виссарионович Сталин ячĕпе тăракан площаде пухăнчĕ. Колоннăсем çинче В. И. Ленинпа И. В. Сталинăн, Коммунистсен партийĕпе Совет правительствин руководителĕсен портречĕсем, стахановла ĕçлеме, пĕтĕм тĕнчери миршĕн кĕрешме чĕнекен лозунгсем, апрельти тата тăватă уйăхри плансене срокчен тултарнă предприятисен рапорчĕсем курăнаççĕ.

Акă, пăравуссем юсакан заводра ĕçлекенсен колонни иртет. Завод коллективĕ апрельти тата тăватă уйăхри плансене чылай ирттерсе тултарнă.

Площаде чугун çул узелĕнче ĕçлекенсем тухаççĕ. Пăравус деповĕн коллективĕ ĕççыннисен уявĕ тĕлне чаплă парне хатĕрленĕ: планран ирттерсе темиçе пин тонна груз турттарнă, топливо нумай перекетленĕ.

Трибуна умĕпе аш-какай комбинатĕнче ĕçлекенсем, Сăр çинчи речниксем, йывăç япаласем тăвакан заводри рабочисем, шкулсемпе техникумсенчи преподавательсемпе вĕренекенсем иртеççĕ.

Канаш

Железнодорожниксен хули уяв тумĕпе илемленнĕ. Пур çĕрте те плакатсемпе транспарантсем, Владимир Ильич Ленинпа Иосиф Виссарионович Сталинăн, партипе правительство руководителĕсен портречĕсем, коммунизм строительствинче çĕнĕ çитĕнӳсем тума чĕнскен лозунгсем курăнаççĕ.

Ирхине 10 сехет. Учительски институт патĕнчи пысăк площадьре халăх туллиех. Кунта демонстраци пуçланчĕ. Трибуна умĕпе вагонсем юсакан завод коллективĕ иртет. Демонстрантсем хăйсем Май уявĕ ячĕпе стахановла вахтăна тăрса тунă çитĕнӳсене кăтартакан диаграммăсем çĕклесе пыраççĕ. Завод коллективĕ апрель уйăхĕнчи производство планне ирттерсе тултарнă. Колонна пуçĕнче чугун шăратакан цехра ĕçлекенсем пыраççĕ. Çак цех апрель уйăхĕн планне 106 процент тултарнă.

Трибуна умĕн колонна хыççăн колонна иртет. Канаш вокзалĕ Май уявĕ умĕнхи ăмăртура мала тухса, Хусан чугун çул управленийĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне илнĕ. Хулари промкомбинатри рабочисемпе служащисем Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе Облпрофсоветăн куçса çӳрекен хĕрлĕ ялавне çĕклесе пыраççĕ. Вĕсем çак ялава иккĕмĕш кварталта та хăйсенче хăварассишĕн кĕрешеççĕ. Комбинат апрель уйăхĕнчи плана 173 процент тултарнă.

«Дружба», «Красный воин», «Швейник» артельсен коллективĕсем аслă уяв ячĕпе пулнă демонстрацире хăйсем Тăван çĕршыв ырлăхĕпе чаплăшĕн тунă çитĕнӳсене кăтартса пачĕç.

Етĕрне

Районти колхозниксем, рабочисем тата интеллигенци Май праçникне пысăк çĕкленӳпе уявларĕç.

Уяв ячĕпе хулара ĕççыннисен представителĕсен савăнăçлă пухăвĕ пулчĕ. Унта пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисен уявĕ — Майăн 1-мĕшĕ çинчен КПСС райкомĕн секретарĕ Н. И. Хромов юлташ доклад туса пачĕ.

Уяв кунĕнче хула ирхине ирех вăранчĕ. Пурте стадиона васкаççĕ. Ĕççыннисен митингĕнче райсовет исполкомĕпе КПСС райкомĕ ячĕпе райсовет исполкомĕн председателĕ Кочергина юлташ, предприятисенчи рабочисемпе служащисен ячĕпе çу завочĕн директорĕ Смоленцев юлташ, хулари интеллигенци ячĕпе Поляков юлташ, районти ялхуçалăх механизаторĕсен ячĕпе МТС директорĕ Вязов юлташ, комсомолецсемпе çамрăксен ячĕпе ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ Дашков юлташ саламларĕç.

Митинг пĕтсен трибуна патĕнчен колоннăсем иртрĕç.

Ĕççыннисен демонстрацийĕ пысăк çĕкленӳпе иртрĕ. Юлашкинчен хулари физкультурниксем хăйсен пултарулăхне кăтартрĕç. Çамрăксем Сăр шывĕ çинче кимĕсемпе ярăнса савăнчĕç.

Кинотеатрта çĕнĕ кинофильм кăтартрĕç.

Районти хаçатсене пăхса тухни

Вырăнти Советсен социализмла ăмăртăвĕ

Партин XIX-мĕш съезчĕ совет халăхĕ умне лартнă историлле задачăсене пурнăçлас ĕçре ĕçсынни депутачĕсен Совечĕсем пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Вĕсен тивĕçĕ—ĕçсыннисен йышлă массисене çĕнĕ пилĕк çуллăх плана тултарма тата иртерсе тултарма мобилизацилесе пырасси.

Суйлавçăсен наказĕсене пурнăçлас, вырăнти Советсен пĕтĕм ĕçне малалла лайăхлатас тĕллевпе сарăлнă социализмла ăмăрту ку ĕçре вĕсене вăй паракан çăлкуç вырăнне пулса тăмалла.

Çакна Вăрмар районĕнчи «Хĕрлĕ ялав» хаçат асра тытни курăнать. Вăл ял Совечĕсен ĕçне тăтăшах çутатма тăрăшать. Юлашки икĕ уйăх хушшинче хаçат ял Совечĕсен ĕçне малалла лайăхлатса пырас ыйтупа икĕ умстатья, çавăн пекех тата заметкăсем те чылай пичетлерĕ.

Хаçат апрелĕн 16-мĕшĕнче тухнă номерте пичетленнĕ умстатьяра питех те кирлĕ ыйту—ял Совечĕсен социализмла ăмăртăвне анлăн сарас ыйтăва çĕклерĕ. Хаçат пĕлтернĕ тăрăх, вырăнти Советсен суйлавĕ хыççăн районти чылай ял Совечĕсем хăйсен ĕçне палăрмаллах лайăхлатнă. Сăмахран, Мăнçырма ял Совечĕ суйлавçăсен наказĕсене тĕплĕн шута илнĕ, вĕсене пурнăçа кĕртмелли ĕçсене палăртса хунă. Ял Совечĕн яланхи комиссийĕсем суйлавçăсен наказĕсене пурнăçлас тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлеççĕ. Ял Совечĕ комиссисем тата уйрăм депутатсем мĕнле ĕçлени çинчен отчетсем итлет. Çапла майпа ĕçлесе, ку ял Совечĕ государство умĕнчи обязательствăсене пурнăçлас—укçа-тенкĕ пухас, выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем хатĕрлес ĕçсене чылай вăйлатнă.

Кунпа пĕрлех хăшпĕр ял Совечĕсем ĕçри çитменлĕхсене питĕ вăраххăн пĕтерсе пыраççĕ. Кĕлкеш, Эçпепе ял Совечĕсем ку тарăнччĕнех суйлавçăсен наказĕсене шута илмесĕр, кивĕ меслетпе ĕçлеççĕ, социализмла ăмăртăва тивĕçлипе хутшăнман. Хаçат Тикаш, Кавал ял Совечĕсене укçа-тенкĕ пухас ĕçе начар ертсе пынăшăн критиклет, Хуруй, Урнар, Шăплат ял Совечĕсем выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем хатĕрлес енĕпе сÿрĕк ĕçленине кăтартса парать.

Хаçатра час-часах ял Совет председателĕсен статьисене вулама пулать. Редакци иртнĕ суйлав вăхăтĕнче депутатсемпе тачă çыхăнчĕ, çак çыхăнăва вăл суйлав хыççăн та çирĕплетсе пыма тăрăшать. Кăçал хаçат ĕçне район Совечĕн депутачĕсенчен И. Бородков, И. Волков, А. Иванов, А. Гурьев, В. Щербань юлташсем активлăн хутшăнаççĕ.

Вăрмар поселок Совечĕн председателĕ А. Гурьев юлташ хаçатăн апрелĕн 12-мĕшĕнчи номерĕнче «Финанс планне срокчен тултарассишĕн» ятлă статья çырчĕ. Вăл унта поселок Совечĕ финанс планне уйăхран уйăха иртерсе тултарнине, ку ĕçе Совета актив вăйлăн пулăшса тăнине палăртать.

«Укçа-тенкĕ пухас ĕç мĕнле пыни çинчен январь уйăхĕнче эпир поселок Совечĕн ларăвĕнче сÿтсе яврăмăр,— тесе çырать вăл статьяра. — Сесси йышăннă решенисене пурнăçлассишĕн уйрăмах налог агенчĕ К. Кожина юлташ тÿрĕ кăмăлпа ĕçлет.

Пĕрремĕш кварталти финанс планне 123,4 процент тултартăмăр».

«Хĕрлĕ ялав» хаçат çапах та ял Совечĕсен ĕçне çителĕклĕ çутатса тăрать теме çук. Ĕçсыннисене кино кăтартас ĕçе лайăхлатас, шкулсемпе ачасен апшĕ-амăшĕсем хушшинчи çыхăнăва çирĕплетес ыйтусене хаçат хăйĕн страницисенче çиĕччĕн лартрĕ, анчах çав вăхăтрах нумай ыйтусене манса хăварчĕ.

Хаçатăн чи пысăк çитменлĕхĕ вăл — ялхуçалăх ĕçченĕсен вăйлă тырпулшăн пыракан кĕрешĕвне ял Совечĕсем мĕнле ертсе пынине çутатмасăр хăварни.

Чăнниие илсен, суйлавçăсем иртнĕ суйлав вăхăтĕнче ял Совечĕсене тата депутатсене пуринчен ытларах тырпул тухăçлăхне ÿстерес, выльăх-чĕрлĕх йышне нумайлатнипе пĕрлех унăн тухăçлăхне хăпартса пырас тĕлĕшпе тимлĕн ĕçлеме, çак ĕçсенче шалти резервсемпе анлăн усă курма хушса хăварчĕç. Хаçат суйлавçăсен çак наказĕсемпе сĕнĕвĕсене пурнăçлас ĕçĕн чăн-чăн организаторĕ пулса тăрайман-ха.

Хаçатсен, вырăнти Советсен ĕçĕнчи кирлĕ ыйтусем тăрăх умстатьясем пичетленипе пĕрлех, Советсен тата лайăх ĕçлекен депутатсен ĕç опытне пĕтĕçтерсе анлăн сарма тăрăшмалла. Анчах «Хĕрлĕ ялав» хаçат ку тĕлĕшпе пысăк парăмра. Вăл хăйĕн вулаканĕсене кăçал пĕр депутат ĕçĕпе те паллаштармарĕ. Вырăнти Советсем çинчен çырнă статьясем нумайăшĕ—сиелтен çырнă статьясем, вĕсем вулакансене çырлахтарма ниепле те пултараймаççĕ.

«Массăсемпе çыхăнса тăни, çак çыхăнăва çирĕплетсе пыни, массăсен сассине итлеме хатĕр пулни—акă мĕнре большевикла ертсе пырассин вăйĕпе никама çĕнтерейменлĕхĕ» — тенĕ Сталин юлташ. Çак чаплă сăмахсем вĕсем «Хĕрлĕ ялав» хаçатра ĕçлекен юлташсене те пырса тивеççĕ. Вырăнти Советсен ĕçĕсем çинчен çырнă чухне, вĕсен Сталин юлташăн çак генилле кăтартăвне асра тытмалла, хаçат ĕçне депутатсене, партипе совет активне тата йышлăнрах хутшăнтарма тăрăшмалла.

Ĕçсынни депутачĕсен Совечĕсем халĕ, çуркунне çитнĕ май, хуласемпе ялсене илемлетес, урамсене йывăçсем лартас ĕçсене пуçарса пыраççĕ. Районти хаçатсен çакăн пек паха пуçарусене вăхăтра асăрхаса, вĕсене сарса пыма тăрăшмалла.

Халĕ ялсенче ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлес ĕçĕн хĕрÿ тапхăрĕ пуçланчĕ. Колхозсемпе ĕçсыннисем государство умĕнчи обязательствăсене мĕнле пурнăçланине номертен номерех çутатса тăма тăрăшмалла.

Малта пыракан ял Совечĕсем çулсеренех хăйсен йăлине кĕнĕ ĕçе—шкулсене çĕнĕ вĕренÿ çулне хатĕрлесе çитерме общественноçа активлăн хутшăнтарассине — юратса тăваççĕ. Анчах çак пархатарлă ĕç çинчен «Хĕрлĕ ялав» хаçат çеç мар, республикăри ытти нумай районсенчи хаçатсем те тивĕçлипе çутатни çук-ха.

Канаш районĕнчи ял Совечĕсем, организацилле-массăлла ĕçе пур майсемпе те вăйлатса, ялти ĕçсыннисен анлă массисене çĕнĕ пилĕк çуллăх плана тултарассишĕн тата иртерсе тултарассишĕн пыракан социализмла ăмăртăва хутшăнтарма пулса, пысăк обязательствăсем илчĕç. Вĕсене Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ ыррарĕ тата ял Совечĕсен сессийĕсенче сÿтсе явма хушрĕ.

Хаçатсен вырăнти Советсен социализмла ăмăртăвне тивĕçлипе организацилесе тата вăйлăн сарса пыракансем пулмалла. Ку ĕçре вĕсене парти райкомĕсемпе хула комитечĕсен куллен-кун пулăшса тăмалла.

Пиллĕкмĕш пилĕкçуллăхри стахановецсем

Тăван çĕршыв ырлăхĕшĕн

Йĕри-тавра çăра тĕтре тăрать. Тул çутăлнă пулсан та, чугун çул çинчи составсем аран-аран, шыв айне пулнă мĕлке пек çеç курăнаççĕ. Часах, витререн тăкнă пек, çумăр çума пуçларĕ.

— Телей çук пирĕн, ĕç ăнмасть...—пăшăрханса, ерипен сăмах хушрĕ кочегар.— Пире питех те пысăк ответлă задани пачĕç, çанталăкĕ вара...

— Çанталăкĕ вăл нимех те мар, машинист пирĕн çамрăк-ха, çухалса кайма пултарĕ,—кăмăлсăррăн пăшăлтатрĕ тахăшĕ.

Çак вăхăтра çамрăк машинист Виктор Курылев пăравус умĕнче тăнă. Вăл питех те кăткăс машинăн кашни пайне тĕплĕн тĕрĕслесе тухнă

— Шанатăп, эсĕ çак нумай груз тиенĕ поезда ăнăçлăн илсе çитерĕн,— тет кĕтмен çĕртен пырса тăнă паллă машинист, СССР Верховнăй Совечĕн депутачĕ Павел Назарович Назаров юлташ. Вара вăл ăна, ашшĕ хăйĕн ачине вĕрентнĕ пек, тĕрлĕ канашсем пама пуçларĕ.— Инерци вăйĕпе пĕр пек усă курма пĕлни кирлĕ. Пăса тĕрĕс те йĕркеллĕ парса пымалла, тăвалла хăпарнă чухнехи йывăрлăхсене çĕнтерме тăрăшмалла. Çакна çул çинче чухне яланах асра тытса пымалла,— вĕрентет опытлă машинист юлташне.

Виктор пăравусăн чи кирлĕ пайĕсене тепĕр хут пăхса тухрĕ Унтан, хăйĕн помощникĕнчен—Сергей Серебряковран рапорт илнĕ хыççăн, пăравус çине хăюллăн та шанчăклăн хăпарса кайрĕ, тормозсене тĕрĕслерĕ. Пурте йĕркеллĕ.

— Халĕ кайма юрать,—хăйĕн шухăшне пурне те илтмелле каларĕ вăл.

Поезд пĕр тикĕссĕн тапранса кайрĕ. Пăравус хыçне кăкарнă тулли те йывăр вагонсен урапясем, кĕвĕ каланă пек, шăкăртатса пыма пуçларĕç. Пăравус чуннин хăвăртлăхне кăтартакан стрелка çÿлерен те çÿле хăпарса пырать. Чугун çул хĕрринчи юпасем хăвăртран та хăвăрт иртсе кайма тытăнчĕç. Усă чÿречерен сивĕ çилпе çумăр тумламĕсем вăрканса кĕреççĕ.

Станци патне çывхарнă чухне тăвалла çул пуçланчĕ. Çамрăк машинист регулятор рукояткине шанчăклăн пусса лартрĕ. Кочегар пăравус кăмаки алăкне хăвăрт та хăвăрт уçса хупать, вĕçĕмсĕр çĕр кăмрăкĕ пăрахать. Машина хăвăртрах ĕçleme тытăнчĕ.

Виктор Курылев, хăйĕн бригади лайăх ĕçленине курсан, кăмăллăн кулса илчĕ, унтан сехечĕ çине пăхрĕ.

— Илтетĕр-и, юлташсем! Эпир графикра кăтартниччен 20 минут маларах станцие çитетпĕр, — савăнса пĕлтерчĕ вăл вĕсене.— Нормăран иртерсе 600 тонна груз турттарса килтĕмĕр.

Çакă вăл иртнĕ кĕркунне, партин XIX-мĕш съезчĕ пынă кунсенче пулнă...

Виктор Курылев ятне Канаш деповĕнче час-часах асăнаççĕ:

— Вăл пирĕн çамрăк лунинец, пултаруллă машинист,— теççĕ ăна.

Вăл пĕчĕк ача чухнех чугун çул хĕррине тухса, пысăк та тĕлĕнмелле хăвăрт чупакан пăравуссем иртсе кайнине пăхса тăма юратнă. Çак машина çине ларса, ăна илсе çÿретесси—унăн ĕмĕчĕ пулнă. Çавăнпа вăл вунтăватă çулта чухне Канашри чугун çул училищине вĕренме кĕнĕ. Пăравус реверсĕ умне тăрас пулсан, питĕ нумай пĕлме кирлине вăл малтанах лайăх чухланă, çавăнпа лайăх вĕренессишĕн хăйĕн вăйне те, вăхăтне те хĕрхенмен. Малтан вăл машинист помощникĕ пулса ĕçлет, 1945 çулта, курсран вĕренсе тухнă хыççăн, пăравуса хăй илсе çÿретме тытăнать.

Пĕррехинче, юлташĕсемпе калаçнă чухне, машинистăн профессийĕ йывăрри çинчен сăмах хускалнă. Хăшпĕрисем çамрăк Виктора урăх ĕç тупса парасси çинчен те калаçма тытăннă. Виктор хăраман.

— Пăравус çинчен каяс-и?.. Тем пулсан та каймастăп!—хыттăн татса каланă вăл...

Пултаруллă çамрăкăн тавракурăмĕпе опычĕ кунтан-кун ÿссе пынă. Унăн асталăхĕ хăпарнă. Çак ĕçре ăна аслă юлташĕ—Павел Назарович Назаров юлташ пысăк пулăшу панă. Вĕсем пĕр-пĕринпе час-часах чунтан-чĕререн калаçнă. Паллă машинист Виктора хăйĕн пысăк опычĕпе паллаштарнă, машинăна [illegible] ма вĕрентнĕ.

Депори техника бюровĕнче опытлă машинистсем çамрăксене час-часах тĕрлĕ лекцисем вуласа панă, хăйсен ĕçĕсемпе паллаштарнă. Виктор Курылев çавăн пек лекцисене яланах çÿренĕ. Вăл опытлă машинистсем йывăр составсене мĕнле илсе çÿретесси çинчен каласа панисене уйрăмах питĕ тимлĕн итленĕ.

1952 çулхи октябрь уйăхĕ Виктор чĕринче ĕмĕр асăнмалăх юлнă. Çав вăхăтра Мускаври Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕ пынă. «Съезд СССР Союзне 1951—1955 çулсенче аталантармалли пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх план тĕлĕшпе панă директивăсене Курылев чунтан-чĕререн савăнса итленĕ. Чугун çул транспортĕнче грузсем турттарасси ÿснине пула, чугун çулсем çинче грузсем малашне нумайрах турттармалла пулать. Çавăнпа та чугун çул транспорчĕ енĕпе тăракан чи пысăк задача вăл чугун çулсен грузсем турттарас пултарулăхне ÿстересси пулать»,—тенĕ сăмахсем ун чĕрине яланлăхах кĕрсе вырнаçнă.

— Тăван çĕршыв ырлăхĕшĕн, халăхсен телейлĕ пурнăçĕшĕн, коммунизм çĕнтерĕвĕшĕн эпир пĕтĕм вăя хурса ĕçлĕпĕр.—тенĕ вăл. Çакăн хыççăн хăйĕн юлташĕсемпе—Сергей Серебряков помощникпа тата Иван Барабанов кочегарпа пĕрле,—пĕтĕм вăя хурса ĕçлеме тытăннă. Илнĕ обязательствăна чыслăн пурнăçласси — вĕсемшĕн закон пулса тăнă. Съезд материалĕсемпе тата Сталин юлташăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă генилле произведенийĕпе хавхаланса, вĕсем иртнĕ çулта 245 йывăр состав илсе çÿретнĕ, нормăран иртерсе 44.416 тонна груз турттарнă, 120 тонна çĕр кăмрăкĕ перекетленĕ. Вĕсем перекетлесе хăварнă çĕр кăмрăкĕ 45 состава яхăн поезд илсе çÿретме çитет.

Кăçал Курылев бригади тата пысăкрах çитĕнÿсем тăвассишĕн кĕрешет. Кăçал вăл нормăран иртерсе пиншер тонна груз турттарнă, чылай çĕр кăмрăкĕ перекетленĕ. Бригада кашни уйăхра 14—16 состав илсе çÿретет, кашни хутра 500—600 тонна таран нормăран иртерсе груз турттарать.

— Мĕнле майпа эсир çавăн пек ăнăçлăн ĕçлетĕр-ха?—тесе ыйтаççĕ вĕсенчен хăшпĕрисем час-часах. Виктор Курылев вĕсене яланах хăйĕн опычĕсемпе тĕплĕн паллаштарма тăрăшать.

Вагонсен составĕ çине нормăран иртерсе тиенĕ кашни 100 тонна груз тăватă процент таран топливо перекетлеме май парать. Çавăнпа Курылев бригади яланах йывăр составсем кăна илсе çÿрет. Çул çинче чухне бригада инерци вăйĕпе тĕрĕс усă курма тăрăшать. Çавăнпа аналла кайнă чухне поезда инерци вăйĕпе чуптараççĕ. Çĕмĕрлерен Канаша килнĕ чухне хăшпĕр вырăнсенче поезда 18 километр хушши таран инерци вăйĕпе чуптарнисем пулнă. Çавăнпа пĕрлех кăмрăка яланах шыв сапса нÿретеççĕ. Шыв сапса нÿретмесен, типĕ кăмрăк вĕтелсе труба тăрăх нумай кĕсе тухса кайма пултарать, усăсăрах нумай расходланать. Пăравус хуранне яланах тасатса тăраççĕ. Ăна час-часах тасатмасан, кăмака çумĕнчи хăрăм ăна хĕрессине питĕ нумай чакарать. Курылев бригади кăмрăка яланах пĕтĕмпех çунтарса пĕтерет, ăна çунса пĕтмесĕр тăкса çая ямасть. Çавăн пекех çĕр кăмрăк шлакне çĕр кăмрăкĕпе пĕрле хутшăнтарса нумай усă курать.

Г. ИСАЕВ.
С. АСЛАН.

Столяр килĕнче

Николай Зосимович Ядрихинскипе эпир малтан заводра паллашрăмăр. Вăл Чăвашстройăн çурт-йĕр пайĕсем тăвакан заводра столярнăй цехра ĕçлет. Кунта хулари çĕнĕ стройкăсем валли пÿрт алăкĕсем, чÿрече рамисем, хăмисем тата ыттисене те туса кăлараççĕ.

— Çĕнĕрен тăвакан 38 хваттерлĕ çурт валли чÿрече рамисем тăватпăр. Строительсем васкатаççĕ. Хăвăртрах туса пĕтерсе парасшăн тăрăшатпăр,—терĕ Николай Зосимович.

Ĕç кунĕ вĕçленнĕ пулин те вăл цехран тухса кайма васкамасть-ха. Ытти рабочисем ĕç хатĕрĕсене тирпейлĕн пуçтарса хунине, ыран ĕçлеме кирлĕ материалсем хатĕррине тĕрĕслет.

Заводран тухнă çĕрте кăтарту хăми çакăнса тăрать. Николай Зосимович хăйĕн хушамачĕ тĕлĕнче 180 процент тесе çырнине курать, ытти рабочисем мĕнле ĕçленипе интересленет.

— Кунта тата тепĕр Ядрихинский пур, сирĕн тăван мар-и вăл,—ыйтрăмăр унтан.

— Владимир Ядрихинский, манăн ывăл вăл. Иксĕмĕр те кунта столяр пулса ĕçлетпĕр. Пирĕн ăратти çавăн пек, пурте столяр. Атте вăтă пулин те çав ĕçе пăрахмасть. Юратнă ĕç кăмăла каять. Хăма татăкĕсенчен тĕлĕнмелле лайăх этажеркăсем, буфетсем туса кăларатăн. Пăхсан чун савăнать. Хулара тата, ăçта çĕнĕ çурт, предприяти—унта эсĕ тунă япала пур. Çав пысăк стройкăсене хутшăннăшăн, вăй хунăшăн савăнатăп. Хула урамĕсем тăрăх çÿрес пулсан çавăн пек çуртсем нумай кăтартма пулать. Анчах автобуспа кайăпăр...

Куйбышев урамĕнчи 68-мĕш пÿрт. Ку Ядрихинскийсен килĕ. Виçĕ çул каярах, государство пулăшнипе, вĕсем хăйсем пÿрт лартнă. Тăватă пÿлĕмлĕ таса та çутă тирпейлĕ пÿрт. Урайне сăрланă, мачана штукатурланă. Хитре шпалер, тĕрлĕ чечексем пÿрте татах илемлетеççĕ. Ачасен тата çывăрмалли пÿлĕмсенче никелленĕ тимĕр кроватьсем. Диван çинче виçĕ çулхи Галя ятлă хĕрĕ картинсем пăхса ларать. Çиччĕмĕш класра вĕренекен Валентина шкултан таврăнчĕ.

— Ну, паян мĕнле паллă илтĕн, мĕнпе савăнтарăн,—тет Николай Зосимович.

— Историпе «4». Ыттисем улшăнман, пуринпе те «5»,—тет Валентина.

— Мĕнле вăл, историе те «отлично» пĕлмелле мар? Тÿрлетес пулать, — тет ашшĕ.

Çав вăхăтра пĕрле ĕçлекен ывăлĕ Владимир çитрĕ.

— Лидия Васильевна, пурте килсе çитрĕмĕр, мĕнпе пуян, хăнала,—терĕ Николай Зосимович арăмне.

— Кăмăла килнисене хатĕрленĕ, апатланăр,—тет Лидия Васильевна. Вăл кашнине уйрăм турилкепе ăш яшки, çысна ашĕнчен тунă котлет парать. Чей ĕçме сахăр, печени, канфет лартса пачĕ. Кам мĕн кăмăллать, çавна çиет.

Апат хыççăн Владимир «Любовь Яровая» кино курма, Валентина пионерсен çуртне хăй вĕренекен кружока тухса кайрĕç.

— Çакăн пек пурăнатпăр, çынсенчен катăк мар. Ĕçне кура пурнăçĕ. Пурнăçĕ вара пирĕн çултан-çул лайăхланса пырать,—тет кил хуçи.

Малтанлăха Н. Ядрихинский Донбасра, шахтăра столяр пулса ĕçленĕ. Лайăх ĕçленĕшĕн ăна Артемуголь комбинат управленийĕ хисеплĕ грамота парса наградăланă. 1946 çултанпа Шупашкарта ĕçлет.

Малтанлăха пĕчченех ĕçленĕ. Ачасем вĕреннĕ. Уйăхне 900—1.100 тенкĕ ĕçлесе илнĕ. Вăл вăхăтра таварсем хальхинчен хаклăрах пулнипе ĕç укçи хирехирĕç кăна çитсе пынă. Тавар хакĕсене малтанхи хут йÿнетни çемье пурнăçĕнче пысăк улшăнусем тума, пурнăçа чылай лайăхлатма май панă.

Владимир çиччĕмĕш класран вĕренсе тухсан, ашшĕ ĕçлекен цехрах столяр ĕçне вĕреннĕ. Халĕ вĕсем иккĕшĕ уйăхне 1.600—1.800 тенкĕ ĕçлесе илеççĕ.

— Нумаях пулмасть, тавар хакĕсене улттăмĕш хут йÿнетнĕ хыççăн, шутласа пăхрăмăр та, çăкăр, сахăр, кĕрпе, ашкакай тата ытти çимĕçсем илме халĕ укçа сахалтарах пĕтет. Эпир кулленех 5—6 тенкĕ таран перекетлетпĕр. Апат-çимĕç йÿнелнипе кăна çулталăкра икĕ пин тенке яхăн перекетленет,—тет Лидия Васильевна.

Пÿртре виçĕ лампа çунать, электроутюгпа, плитапа усă кураççĕ. Вĕсемшĕн уйăхне 20 тенке яхăн, уйăхри ĕç укçин пĕр процентĕ ытларах каять.

Тавар хакĕсене çĕнĕрен йÿнетнĕ хыççăн Николай Зосимович «Рекорд» радиоприемник туяннă.

Ĕç хыççăн çемьере пĕрле пухăнса радиопа паракан концертсене, çĕнĕ хыпарсене итлеççĕ. Халĕ, çу кунĕсем çывхарса çитнĕ май, «Индпошив» мастерскойне кайса кашнин валли пĕрер мăшăр атă-пушмак çĕлеме заказ панă. Володя хăйне валли чи лайăх пусма тавартан костюм çĕлетнĕ.

Завода ĕçлеме кĕрсенех вĕсем Чăвашстрой тресчĕн çуртĕнче хваттерте пурăннă. Начар пулман унта та. Анчах пĕррехинче Лидия Васильевна «пурнăç кун пекех лайăх пулсан, тăрăшса тытăнсан хамăр валли пÿрт те лартма пултаратпăр», тени Николай Зосимовича шухăша янă. Çитменнине тата пÿрт лартакансене трестра материалсем, машинăсем парса пулăшнă. Н. Ядрихинский те ĕçе пикенсе тытăнать. Государство ăна пÿрт лартма 10 пин тенкĕ укçа кивçен, çĕр участокĕ парать, завод пулăшать. Пĕр çу касиччен унăн пÿрт хатĕр пулса тăрать.

— Руна пин тенкĕне çичĕ çуллăха пачĕç. Кашни уйăхра 128 тенкĕ тÿлетĕп. Маншăн вăл пĕрре те хăрушă мар. Мĕншĕн тесен эпĕ яланах ĕçлеме пултаратăп, мана ĕççĕр тăрса юласси хăратмасть. Пахчара тĕрлĕ çимĕçсем лартса тăватпăр, выльăх-чĕрлĕх те тытатпăр, пысăк сăмăллăх,—каласа парать Николай Зосимович.

Ядрихинскийсем час-часах кинора, театрта пулаççĕ. Эпир пырас умĕн малтанхи кунне вĕсем «Твое личное дело» çĕнĕ спектакль кайса курнă. Ачасем пĕр çĕнĕ кинофильма та курмасăр хăвармаççĕ.

— Кăçал отпуск вăхăтĕнче ăçта канма ĕмĕтленетĕр, — интересленетĕмĕр эпир.

— Килти ĕçсене пула юлашки çулсенче нистах та каяймарăм. Кăçал канмалли çурта каятăп. Эпĕ икĕ хутчен санаторинче пулнă. Профсоюз путевка пачĕ. Валентина кашни çулла пионер лагерĕнче канать. Владимир çумлă-хыçлах икĕ çул ĕнтĕ канмалли çуртра пулчĕ. Лидия Васильевна тухса çÿремест-ха, çавна илсе каясшăн.

Ядрихинский лайăх ĕçлет кăна мар, тулăх та культурăллă пурăнать, вĕренет. Парти историне, партин XIX-мĕш съезчĕн материалĕсене вĕренет. Аслă çулпуçăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» произведенине вулать, çак произведени тăрăх пулакан лекцисене итлеме çÿрет.

— Пурнăç нихçанхинчен те ытларах лайăхланса çитрĕ, анчах малашнехи тата лайăхрах пулмалла. Çав куна çывхартасшăн тăрăшса ĕçлетпĕр те ĕнтĕ. Ман патра вăтă атте час-часах пулать. Эпир мĕнле пурăннине курса савăнать. Хăй çамрăк чухне улпут-хуçасемшĕн ĕçлесе, выçăллă-тутăллă пурăнса иртернишĕн хурланать. Ĕлĕкхи каламасăрах паллă, вăл текех пулаймĕ. Пирĕн халăх хăйĕн телейне сыхлама яланах хатĕр,—тет Николай Зосимович.

Унăн кăкăрĕ çинчи «Отечественнăй вăрçă орденĕ» тата нумай тĕрлĕ медальсем те савăн çинченех калаççĕ.

Çапла ĕçлет, çапла пурăнать рядовой совет çыннин çемйи. Кун пек çемьесем кашни килте, кашни хваттерте. Вĕсем Коммунистсен партийĕпе Совет государстви ĕçсыннисен пурнăçне лайăхлатассишĕн тăрăшнипе хăйсен кулленхи пурнăçĕнче туяççĕ.

Н. МИНИН.

„Коммунизм ялавĕ“ хаçатра çырнă хыççăн

„Ухьянкин тавăрать...“

1952 çулхи октябрĕн 21-мĕшĕнче «Коммунизм ялавĕ» хаçатра «Ухьянкин тавăрать...» ятлă çыру пичетленсе тухнăччĕ. Унта С. Ухьянкин Канаш районĕнчи Сиккасси вăтам шкулĕн директорĕ пулнă вăхăтра шкул участокĕнчен пухса кĕнĕ тырра йÿнĕ хакпа сутăн илнине, хăйĕн çывăх тусĕсене тырă сутнине тата ытти тивĕçсĕр ĕçсем тунине кăтартса панăччĕ.

КПСС Чăваш обкомĕн бюровĕ С. Ухьянкина тивĕçсĕр ĕçсем тунăшăн хытă ятланă.

Парти райкомĕ пропагандистсемпе ĕçлени

«Идеологилле ĕç,—терĕ Г. М. Маленков юлташ партин XIX-мĕш съездĕнче,—партин чи пысăк обязанноçĕ пулать, ку ĕçе хакламанни партипе государство интересĕсене питех те пысăк сиен кÿме пултарать. Социализмла идеологи влиянийĕ вăйсăрланни яланах буржуалла идеологи влиянийĕ вăйланнине пĕлтерет,—çакна пирĕн кирек хăçан та асра тытас пулать».

КПСС Калинински райкомĕ, партин çак кăтартăвне пурнăçласа, районта идеологилле ĕçе вăйлатасси çине яланах тимлĕн пăхать, коммунистсемпе партире тăманнисен марксистла-ленинла вĕренĕвне куллен ертсе пырать. Халĕ парторганизацисем çумĕнчи политшкулсемпе кружоксенче пуринче те партин XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсемпе материалĕсене тата Сталин юлташăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă генилле произведенине вĕренеççĕ. Çак историлле документсене 57 политшкулпа кружокра пурĕ 702 çын тата 238 çын харпăр хăй тĕллĕн вĕренеççĕ.

Партилле пропагандăра чи кирли вăл—занятисене идейăпа политика тĕлĕшĕнчен çÿлĕ пусăмра иртерни. Çакă вăл пĕтĕмĕшпех пропагандистсен, лекторсен, консультантсен составĕнчен, вĕсем хăйсем теорие мĕнле пĕлниччен тата марксизм идейисене коммунизм строительствин задачисемпе тачă çыхăнтарса пропагандăлама пултарниччен килет.

Çакна шута илсе, парти райкомĕ пропагандистсем суйласа илес ĕç çине тимлĕ пăхрĕ. Пропагандистсем пулса ĕçleme вăтам пĕлÿрен кая мар илнĕ, политикăна кирлĕ пек пĕлекен тата пропаганда ĕçĕнче опыт туяннă юлташсене çирĕплетнĕ. 56 пропагандистран 35-шĕ аслă шкулсенче вĕреннĕ, 21-шĕ вăтам шкулсенчен вĕренсе тухнă, 45 пропагандист политшкулсемпе кружоксене виçшер çул ертсе пыраççĕ. 1951—1952 çулсенче 19 пропагандист КПСС обкомĕ иртернĕ уйăхлăхе ытти курссенче вĕреннĕ.

Пропагандистсем суйласа илнĕ чухне коммунистсен шухăш-кăмăлне те шута илнĕ. Çапла, сăмахран, Энгельс ячĕпе тăракан тата «Гвардеец» колхозсенчи парторганизацисем ыйтнипе И. Ивановпа П. Прокопьев юлташсене пропагандистсем пулса ĕçлеме çирĕплетмерĕмĕр. Вĕсем хăйсен ĕçне сиелтен туса пынă, занятисене идейăпа теори енчен кирлĕ пусăмра иртермен, вĕренÿ пособийĕнчи материала вуласа панипех çырлахнă.

26 консультантран 22-шĕ аслă шкулсенче вĕреннĕ, 4-шĕ вăтам шкулсенчен вĕренсе тухнă. Пур консультантсем те икшер çул ĕçлеççĕ. Штатра тăман лекторсем пулса ĕçлеме те пĕлÿ çителĕклĕ юлташсене суйласа илнĕ.

Калас пулать, пропагандистсен кадрĕсемпе ĕçлесси вĕсене суйласа илнипех вĕçленмест. Пропагандистсен идейăллатеорилле пĕлĕвĕсене ÿстерессишĕн тата вĕсен методика тĕлĕшĕнчи пултарулăхне лайăхлатассишĕн куллен ĕçлемелле. Халĕ партилле пропагандăн чи пысăк задачи партин XIX-мĕш съезчĕн материалĕсемпе решенийĕсене тата И. В. Сталин юлташăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă произведенине вĕренесси пулнă май, çак историлле документсене пропагандистсен хăйсен тĕплĕн вĕренмелле.

Пропагандистсен пĕлĕвĕсене ÿстерме пулăшас ĕçре вĕсен ялан ĕçлекен семинарĕсен пĕлтерĕшĕ питĕ пысăк. Парти райкомĕ çумĕнче виçĕ семинар пур. Кашни семинара 20—25 пропагандиста хутшăнтарнă, занятисем çирĕп расписанипе пулса пыраççĕ.

Семинарсенче лекцисем кăна иртерни çителĕксĕр. Çакăн пек çитменлĕх, сăмахран, иртнĕ çулта пулнă. Кăçал ку çитменлĕхе пĕтернĕ, уйрăм темăсемпе тата марксизм-ленинизм классикĕсен произведенийĕсем тăрăх занятисем мĕнле иртермелли çинчен пропагандистсене кашни семинартах методикăлла кăтартусем паратпăр. Çапла, сăмахран, пропагандистсен иртнĕ уйăхри семинарĕнче, лекцисем вуланисĕр пуçне, «Пиллĕкмĕш пилĕкçуллăх тĕлĕшпе партин XIX-мĕш съезчĕ панă директивăсем» темăпа заняти иртертĕмĕр. Çак заняти пропагандистсен ку темăри пĕлĕвĕсене тарăнлатма чылай пулăшрĕ.

Семинарсен занятийĕсенче пропагандистсене пĕр-пĕрин опычĕпе те паллаштаратпăр.

Семинарсене парти райкомĕн секретарĕсем ертсе пыраççĕ. Унта лекцисем вулама райкомăн штатра тăман лекторĕсене хутшăнтаратпăр, лекцисен тексчĕсене лекторсен ушкăнĕн ларăвĕсенче пăхса тухатпăр. Çапла туни лекцисен пахалăхне лайăхлатма май парать.

Занятисен пахалăхĕ лайăхланнине курра, унта пропагандистсем пурте çÿрекен пулчĕç. Иртнĕ çулсенче семинарсене пропагандистсем 50—60 процент кăна çÿренĕ пулнă.

Пропагандистсен районти пухăвĕсем те пулаççĕ. Вĕренÿ çулĕ пуçланнăранпа çавнашкал пухусем икĕ хутчен пулнă. Вĕсенче политикăлла вĕренĕва çĕнĕ программăпа йĕркелесси çинчен тата Маленков, Берия, Молотов юлташсем мартăн 9-мĕшĕнче каланă сăмахсене, партипе правительствăн юлашки вăхăтри решенийĕсене вĕренесси çинчен сÿтсе явнă.

Парти райкомĕ çумĕнче çавăн пекех консультантсен семинарĕ пур. Юлашки занятисенчен пĕринче икĕ лекци пулчĕ, штатра тăман лектор А. Попов юлташ хăйĕн ĕçри опычĕ çинчен каласа пачĕ.

Парти вĕренĕвне лайăхлатас ĕçре парти райкомĕ кружоксемпе политшкулсенчи занятисен, лекцисемпе консультацисен пахалăхне куллен тĕрĕслени пысăк вырăн йышăнать. Çак тĕрĕслÿ пропаганда ĕçĕнчи çитменлĕхсене палăртма, вĕсене вăхăтра пĕтерсе пыма май парать. Çакна шута илсе, парти райкомĕн секретарĕсемпе работникĕсем занятисенче, лекцисемпе консультацисенче тăтăшах пулаççĕ. Занятисенче хăçан тата кăмăн пулмаллине палăртса, парти райкомĕн пропагандăпа агитаци пайĕ план тунă.

Кунсăр пуçне, КПСС райкомĕн бюровĕ уйрăм пропагандистсен, лекторсен, консультантсен тата пуçламăш парторганизаци секретарĕсен отчечĕсене итлет. Нумай пулмасть «Партизан» колхозри пуçламăш парторганизаци çумĕнчи кружок мĕнле ĕçлени çинчен сÿтсе явнă. Кружок ĕçне малтан парти райкомĕнче ĕçлекенсем тĕплĕн тĕрĕслерĕç. Тĕрĕслÿрен Н. Никитин пропагандист занятисене çиелтен хатĕрленни, вĕсене идейăпа теори енчен çителĕксĕр иртерни палăрнă. Вĕренекенсем занятисене кирлĕ пек хатĕрленсе пыман, конспектсем çырман, вĕренÿ пособийĕсем çитмен. Пуçламăш парторганизаци пропаганда ĕçне тивĕçлипе хакламан, коммунистсем хăйсен политикăлла пĕлĕвĕсене мĕнле ÿстернине тĕрĕслемен, вĕренĕве лайăхлатас ыйтăва парти пухăвĕсенче сÿтсе явман.

Çак çитменлĕхсене пула кружок йĕркеллĕ ĕçлеймен. Пурĕ 4 заняти пулман, 12 вĕренекентен 5—6 çын кăна занятисене çÿренĕ. Кружок ĕçĕсем çинчен райком бюровĕн ларăвĕнче сÿтсе явнă хыççăн парторганизаципе пропагандист вĕренĕве лайăхлатма мерăсем йышăнчĕç, кружок ĕçĕ те палăрмаллах вăйланчĕ.

Партин XIX-мĕш съезчĕн материалĕсене мĕнле вĕренни çинчен райком бюровĕн ларăвĕсенче пропагандистсемпе парторганизаци секретарĕсенчен пурĕ 6 отчет итленĕ. Парти райкомĕн бюровĕнче çавăн пекех штатра тăман лектор И. Нарышкин юлташ тата штатра тăман консультант А. Попов юлташ отчетсем туса пачĕç.

Райкомăн кăçалхи февральте пулнă пленумĕнче «Трактор» колхозри пуçламăш парторганизаци секретарĕ П. Васильев юлташ тата Ермошкăри çичĕ çул вĕренмелли шкулти парторганизаци секретарĕ В. Осипов юлташ отчетсем туса пачĕç. Ку организацисенче коммунистсен вĕренĕвне йĕркелес ĕçре чылай çитменлĕхсем пурри палăрчĕ. Парти райкомĕ хăй те ку организацисене кирлĕ пулăшу паман.

Пленум хыççăн çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе райком чылай ĕçсем туса иртерчĕ. Парти райкомĕн штатра тăман лекторĕсем çав шкулта 3 лекци, «Трактор» колхозра 2 лекци туса пачĕç.

Пленум хыççăн пур парторганизацисенче те съезд материалĕсене, И. В. Сталин юлташăн çĕнĕ произведенине вĕренесси мĕнле пыни çинчен тата ку ĕçе лайăхлатмалли мерăсем çинчен сÿтсе яврĕç.

Анчах пропагандистсене ертсе пырас ĕçре пирĕн çитменлĕхсем нумай-ха. Тепĕр чухне райком бюровĕн решенийĕсем пурнăçланмасăр юлаççĕ. «Новый путь» колхозри парторганизаци çумĕнчи кружок руководителĕн И. Павлов юлташăн отчетне итлесе, бюро решени йышăннăччĕ. Çитменлĕхсем кружокра халĕ те пулса пыраççĕ-ха. Вĕренекенсем занятисене сахаллăн çÿреççĕ, вĕсене пропагандист кичем иртерет.

Парти вĕренĕвĕн çулĕ вĕçленсе килет. Итоглă занятисене лайăх иртерессипропагандистсен, консультантсен тата пуçламăш парторганизацисен ответлă задачи пулать. Çак ĕçре пропагандистсене райкомăн тивĕçлĕ пулăшу памалла, вĕренÿ çулне ăнăçлă вĕçлеме тăрăшмалла.

И. ПРОКОПЬЕВ,
КПСС Калинински райкомĕн секретарĕ.

„Президент Эйзенхауэр тухса калани пирки“ ятлă статья çинчен урăх çĕршывсенче мĕн çыраççĕ

Китай Халăх Республики

ПЕКИН, апрелĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Центральнăй хаçатсем паян «Правда» тата «Известия» хаçатсен «Президент Эйзенхауэр тухса каланă пирки» ятлă умстатьине пичетлесе кăларнă.

Франци

ПАРИЖ, апрелĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Парижра тухакан хаçатсем «Правда» тата «Известия» хаçатсен умстатьи çинчен пĕлтерние пĕрремĕш страницăра пысăк заголовоксемпе пичетлесе кăларнă. Нумай хаçатсем çак статьяна пĕтĕмĕшпех пичетлесе кăларнă. Вĕсем умстатьяна «уйрăмах шанчăклăн çырнине» палăртаççĕ.

«Монд» хаçат умстатьяра çапла çырать: «СССР шанчăклăн та кăмăллăн панă ответ калаçусем пуçламалли алăка уçă тытса тăрать».

«Пари-пресс-энтрансижан» хаçатра Морис Ферро, Совет Союзĕпе хĕвеланăçĕнчи державăсем хушшинчи хирĕçусене палăртнипе пĕрлех, çак хирĕçусем вĕсем «тăватă аслă держава представителĕсен канашлăвне пухас тĕлĕшпе чăрмав пулма пултараймаççĕ», тесе çырать.

«Фран-суар» хаçат «Правда» хаçатăн умстатьин пĕлтерĕшĕ уйрăмах пысăк пулнине палăртать, Совет Союзĕ калаçусем иртерме килĕшет, анчах малтан кăларса тăратакан нимĕнле условисене те йышăнмасть, тет.

«Фигаро» хаçатра Роже Масип çакна палăртать: «Правда» хаçатри умстатьян тĕп пĕлтерĕшĕ çакăнта пулать: «Мускав хĕвеланăçĕнчи çĕршывсемпе калаçусем иртерме хатĕр».

Итали

РИМ, апрелĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Италире тухса тăракан хаçатсем пурте «Правда» тата «Известия» хаçатсенче Эйзенхауэр сăмахĕ пирки çырнă умстатья çинчен нумай çыраççĕ. «Унита» хаçат малтанхи страницăра: «Правда» Эйзенхауэра тĕнчери ыйтусене мирлĕн татса парасси çинчен калаçусем иртерме СССР хатĕр тăрать, тесе ответ парать» ятлă статья пичетлесе кăларнă. Совет руководителĕсем Америка правительстви пек мар, вĕсем хăйсен мирлĕ сĕнĕвĕсенче килĕшмелле мар условисем кăларса тăратмаççĕ.

«Аванти» хаçат: «Правда» статьи тĕнчери лару-тăрăва мир çулĕпе тата икĕ система пĕр-пĕринпе килĕштерсе пурăнмалли çулпа ăнăçлăн аталанса пыма çĕнĕ малашлăх уçса пачĕ, тесе çырать.

Сылтăм хаçатсем «Правда» хаçат статьинчен илнĕ пысăк вырăнсене пичетлесе кăлараççĕ. «Мессаджеро» хаçат умстатьяра: «тӳрĕлĕхлĕ калаçусем иртерни кирлĕ, çак калаçусем ыйтусене мĕнле те пулсан анлăрах сӳтсе явасси патне илсе пыма пултарччăр тесе ырă сунас пулать», тет. Çав вăхăтрах вăл «Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе вĕсен союзникĕсен малашне те... хĕçпăшалланмалла», тесе çырать.

Германи

БЕРЛИН, апрелĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). «Правда» тата «Известия» хаçатсен умстатьине нимĕçсен демократилле общественноçĕ ырă кăмăлпа йышăннă.

«Берлинер цейтунг» хаçат «Эйзенхауэр мĕн çинчен маннă» ятлă статьяра çакна палăртать: Совет Союзĕ Германие пĕрлештерессишĕн тата унпа мирлĕ договор тăвассишĕн тăнă вăхăтра, США правительствипе Аденауэр, нимĕç халăхĕн ирĕкне хирĕç пырса, Германие çаплах икĕ пая уйăрса тăрас тата унăн Хĕвеланăçĕнчи пайне агрессилле çар союзне кĕртес политика тытса пыраççĕ. Совет Союзĕ Германи тĕлĕшпе тытса пыракан политика, тесе çырать хаçат, Потсдамра тăватă аслă держава йышăннă килĕшӳ çине таянса тăрать. Çавăнпа та «Правда» хăйĕн умстатьинче çапла çырать: Германи ыйтăвне мирлĕн татса пама кирлине йышăнас пулсан, çак килĕшĕве шута илмесĕр тăма çук, тет. Пĕрлĕхлĕ те мирлĕ Германие хирĕç тăракансем пĕр хут çеç мар ĕнтĕ Потсдамри килĕшӳ «кивелнĕ» тесе калама пăхаççĕ. Анчах та çак килĕшĕвĕн тĕп пункчĕсем паян кун та, халиччен пекех, пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ, çавăнпа та вĕсене кивелнĕ тесе шутлама çук.

«Нейе цейт» хаçат «Правда» умстатьи Германи ыйтăвне татса парас тĕлĕшпе тепĕр хут малашлăх уçса панине палăртать.

Румыни

БУХАРЕСТ, апрелĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Румынири пур хаçатсем те «Правда» хаçатăн умстатьине пичетлесе кăларнă.

Болгари

СОФИЯ, апрелĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Болгарири пур хаçатсем те «Правда» тата «Известия» хаçатсен апрелĕн 25-мĕшĕнчи «Президент Эйзенхауэр тухса каланă пирки» ятлă статьине пичетлесе кăларнă.

Албани

ТИРАНА, апрелĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Албанири хаçатсем пĕрремĕш страницăра «Правда» хаçат Эйзенхауэр сăмахĕ пирки çырнă умстатьяна пичетлесе кăларнă.

Инди

ДЕЛИ, апрелĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Паян тухнă хаçатсем пурте тенĕ пекех «Правда» тата «Известия» хаçатсен умстатьи пирки статьясем пичетлесе кăларнă.

«Трибюн» хаçат çапла çырать: тĕнчери тӳрĕ кăмăллă çынсен Совет Союзĕ Эйзенхауэра панă ответăн çак положенийĕпе килĕшмелле: Инçет Хĕвелтухăçĕпе Кăнтăр Хĕвелтухăç Азири мирпе лăпкăлăх Инçет Хĕвелтухăçĕнчи ыйтусене тивĕçлипе татса панинчен—Корейăна пĕрлештернинчен, Китая Пĕрлешнĕ Нацисен Организацине илнинчен тата Тайвань çинчен тăракан ыйтăва татса панинчен килет. США-н çакна йышăнас пулать: Китайра халăх революцийĕ çĕнтерни вăл—пулса тăнă факт, Тайвань—Китай территорийĕ пулса тăрать.

«Хиндустан таймс» хаçат çапла çырать: «Вырăссем Эйзенхауэра панă ответа пур çĕрте те лайăх йышăнса илнĕ». Малалла хаçат: «Совет лидерĕсем США президенчĕ пек мар, мир тума тăрăшас тĕлĕшпе тепĕр енĕ умне малтан татса пама кирлĕ тесе нимĕнле условисем те кăларса тăратмаççĕ», тесе палăртать. Совет Союзĕнчен сăмахсем мар, ĕçсем ыйтакан çынсен çакна манма юрамасть: мире тĕреклетес тĕлĕшпе Корейăри тыткăнри çар çыннисене репатриаци тăвас ыйту тăрăх вырăссем пысăк утăм турĕç. Халлĕхе хĕвеланăçĕ çакнашкал нимĕнле утăм туни те курăнмасть-ха, тесе çырать хаçат.

Болгарире пилĕк çуллăх плана тултарнă

СОФИЯ, апрелĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Болгари Халăх Республикин Министрĕсен Совечĕ çумĕнчи Государство план комиссийĕ тата Центральнăй статистика управленийĕ ĕнер Болгари Халăх Республикин халăх хуçалăхĕн пĕрремĕш пилĕк çуллăх планне (1949—1953 ç. ç) тултарни çинчен пĕлтернĕ.

Аслă Халăх пухăвĕ 1948 çулхи декабрĕн 29-мĕшĕнче йышăннă пилĕк çуллăх плана, тенĕ пĕлтерӳре, пур показательсем енĕпе те срокчен тултарнă. Чылай енĕпе плана иртерсе тултарнă.

Кăнтăр-Хĕвеланăç Китайри промышленность строительстви

ПЕКИН, апрелĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентствин корреспонденчĕ Чунцинран çапла пĕлтерет: Кăнтăр-Хĕвеланăç Китайри ĕçсынисем кăçал çĕнĕ электростанцисем, промышленность предприятийĕсем тума тытăнаççĕ, çутçанталăк пуянлăхĕсемпе анлăрах усă курма пуçлаççĕ.

Çак районăн лаптăкĕ Францирен 2,5 хут пысăкрах, унта 7 миллион çын пурăнать. Кăнтăр-Хĕвеланăç Китайра çулталăк хушшинче тĕслĕ металлургие вăйлатма пĕлтĕрхинчен 10 хут ытларах, çĕр кăмрăк промышленноçне вăйлатма, 1952 çулхипе танлаштарсан, виçĕ хут ытларах укçа-тенкĕ хываççĕ.

1953 çулхи план тăрăх Кăнтăр-Хĕвеланăç Китайри промышленность 1952 çулхинчен 37 процент ытларах продукци туса кăлармалла. Уйрăмах йывăр промышленноçа аталантарас ĕç çине тимлĕ пăхаççĕ. Çавăн пекех пир-авăр промышленноçне те вăйлатаççĕ.

Капитальнăй ĕçсем тума уйăракан укçаран пысăкрах пайĕ çĕнĕ фабрикăсем, заводсем, рудниксемпе шахтăсем тума тата халĕ ĕçлекен предприятисене пысăклатма каять. 98 пысăк предприяти тума тытăннă ĕнтĕ. Вăл шутра: икĕ электростанци, Юньнань провинцийĕнчи тăхлан кăларакан предприяти, çакса тунă 16 километр тăршшĕ çул. Чунцинра çак районти чи пысăк пир-авăр фабрикинчен пĕринче пир тĕртекен цеха пысăклатаççĕ.

Çĕнĕ электростанцисенчен пĕри кăçал ĕçлеме тытăнать. Вăл промышленность предприятийĕсене электричество энергийĕ парса тăма пуçлать.

Кăнтăр-Хĕвеланăç Китайри çĕнĕрен тăвакан промышленность предприятийĕсенчен нумайăшĕ кăçал продукци туса кăларма пуçлаççĕ. 1952 çулхипе танлаштарсан, кăçалхи план тăрăх хурçă 59 процент ытларах, хурçă прокат—37 процент, пăхăр—54 процент, тимĕр—12 процент, тăхлан—22 процент, çĕр мамăк пир-авăрĕ—46 процент ытларах туса кăлармалла.

Кăнтăр-Хĕвеланăç Китайра çĕр айĕнчи пуянлăхсем нумай. Унта çĕр кăмрăкĕ, тимĕр, цинк, асбест тата нефть питех те нумай тĕл пулать. Çĕр айĕнчи пуянлăхсене лайăх тĕпчесе вĕренмелле тата вĕсене кăларма тытăнмалла. Кăнтăр-Хĕвеланăç Китайра çак тĕлĕшпе те нумай ĕçсем туса ирттереççĕ. Çĕршывăн çак районĕнче геологипе разведка ĕçĕсен пысăкăшĕ 1953 çулта 7 хут ӳсет. Нефть шырас тĕлĕшпе кăна 61 пин тăваткал километр лаптăк çинче ĕçсем туса ирттермелле.

Çак районта транспорта лайăхлатас ĕç çине те тимлĕн пăхаççĕ. Шоссе çулĕсем нумайланаççĕ.

Кăçал Кăнтăр-Хĕвеланăç Китайра техника шкулĕсем çĕнĕрен 19 уçнă. Вĕсенче халĕ 10.000 çын ытла вĕренет.

Корейăри ĕçсем

ХАЛĂХ ÇАРĔН ГЛАВНĂЙ КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, апрелĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн Главнăй командованийĕ паян çапла пĕлтернĕ: иртнĕ кун хушшинче фронтсенче нимĕнле улшăнусем те пулман.

Халăх çарĕн зенитнăй чăсĕсем тата самолетсене хирĕç кĕрешекен салтакĕсем тăшманăн 4 самолетне персе ӳкернĕ.

ПХЕНЬЯН, апрелĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн Главнăй командованийĕ апрелĕн 30-мĕшĕнче çапла пĕлтернĕ:

Иртнĕ кун хушшинче Корея Халăх çарĕпе Китай халăх добровольцĕсен чăсĕсем разведка тăвас тĕллевпе тăшмана хирĕç çапăçнă. Самолетсене хирĕç кĕрешекен салтаксем паян тăшманăн 2 самолетне персе ӳкернĕ.

ПХЕНЬЯН, майăн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн Главнăй командованийĕ паян çапла пĕлтернĕ: фронтăн уйрăм участокĕсенче разведка тăвакан пысăках мар ушкăнсем хушшинче тытăçусем пулса иртнĕ.

Халăх çарĕн зенитнăй чăсĕсем паян тăшманăн 3 самолетне персе ӳкернĕ.

ПХЕНЬЯН, майăн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн главнăй командованийĕ паян çапла пĕлтернĕ: иртнĕ кун хушшинче фронтсенче нимĕнле улшăнусем те пулман. Хăшпĕр вырăнта артиллерирен персе тăнă.

Ĕнер Хадо утравĕн районĕнче çыранри артиллери тăшманăн пĕр тральщикне путарнă.

Самолетсене хирĕç кĕрешекен салтаксем паян тăшманăн 2 самолетне персе ӳкернĕ.

АМЕРИКА АВИАЦИЙĔ ПХЕНЬЯН ÇИНЕ ТИСКЕРРĔН ТАПĂННĂ

ПХЕНЬЯН, майăн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Майăн 1-мĕшĕнче—Пĕтĕм тĕнчери ĕçсынписен уяв кунĕ—ирхине 11 сехетре Америка авиацийĕ мирлĕ Пхеньян çине тискеррĕн тапăннă. Пĕлĕтсем хыçĕнче пытанса, Америкăн çĕнĕ конструкциллĕ реактивлă истребитель-штурмовикĕсем ĕçсыннисен уявне мирлĕн ирттерекен хула çине вăрттăн вĕçсе пынă. Вуншар самолет пĕлĕт айĕнчен вĕçе-вĕçе тухса Пхеньян хулинчи мирлĕ халăх пурăнакан кварталсем çине пысăк вăйпа çĕмĕрекен осколоклă бомбăсем пăрахнă, халăх çине пулеметсенчен пенĕ.

Тăшман уйрăмах хулан халăх йышлă пурăнакан хĕвеланăç районĕ çине вăйлăн тапăннă.

Кунта илнĕ сведенисем тăрăх, Америка авиацийĕ паян çавăн пекех тата Çурçĕр Корейăри ытти чылай хуласемпе ялсем çине те бомбăсем пăрахнă тата пулеметсенчен пенĕ.

Корейăра перемири çинчен пыракан калаçусем

ПЕКИН, майăн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентствин корреспонденчĕ Кэсонран пĕлтернĕ тăрăх, Корейăпа Китай енĕ Корейăри перемири çинчен паян пулса иртнĕ калаçусем çинчен çакăн пек пĕлтерӳ пичетлесе кăларнă:

Паян икĕ енĕн делегацийĕсем тепĕр хут тĕл пулнă.

Корейăпа Китай енĕн делегацийĕн пуçлăхĕ генерал Нам Ир ларура çакăн çинчен уççăн кăтартса панă: тӳррех репатриаци туман çар çыннисене икĕ енĕ килĕшсе татăлнă нейтральнăй государство аллине памалла туни—тыткăна илнĕ çар çыннисене репатриаци тăвасси çинчен тăракан ыйту пирки тухса тăнă тавлашусене йĕркелесе ямалли пуринчен тĕрĕсрех меслет пулса тăрать. Çакăн пек условисенче, тенĕ малалла Нам Ир, пирĕн енĕ тепĕр енĕпе консультаци ирттерес тĕллевпе Азири государствăсенчен пĕрне кандидата тăратма шутлани çинчен пĕлтерме хатĕр. Икĕ енĕ килĕшнипе палăртнă нейтральнăй государствăна тивĕçлипе хисеплемелле тăвас тесе, пирĕн енĕ çапла шутлать: нейтральнăй государство кандидатури çинчен сӳтсе явма икĕ енĕ те çӳлте асăннă принципа килĕшнĕ хыççăн—тӳрех репатриаци туман çар çыннисене икĕ енĕ те килĕшсе татăлнă нейтральнăй государство аллине памалла тăвасси çинчен калаçса татăлнă хыççăн сӳтсе явма тытăнмалла.

Анчах паянхи ларура тепĕр енĕ тыткăнри çар çыннисене тыткăна илнĕ енĕн контролĕнче тăракан районтан икĕ енĕ те килĕшсе татăлнă нейтральнăй государство аллине памалла тăвассине çаплах хирĕçленĕ. Тепĕр енĕ çавăн пекех тата нейтральнăй государство çинчен тăракан кандидатура çинчен çӳлте кăтартнă принцип пирки калаçса таталиччен сӳтсе явассишĕн тăнă. Çавăн пирки те паянхи ларура нимĕнле килĕшӳ те пулман.

Икĕ енĕ те ыран ирхине 11 сехетре тепĕр хут тĕл пулма йышăннă.

ЛОНДОН, майăн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Англире тухса тăракан хаçатсем Корейăра перемири тăвасси çинчен пыракан калаçусем çинчен çырнă чухне, чи малтан, Америка делегачĕ генерал Гаррисон Китайпа Корея енĕ тыткăнри çар çыннисене асăрхаса тăрас тĕлĕшпе нейтральнăй çĕршыв вырăнне Азири государствăна суйласа илесси çинчен панă сĕнĕве сирсе пăрахни çинчен тата çакăн хыççăн Америка госдепартаменчĕ пĕлтерни çинчен çыраççĕ.

«Таймс» хаçат палăртнă тăрăх, Корейăпа Китай енĕ тăратакан условисене куртаранччен пурне те конструктивлă сĕнӳсем мар тесе сирсе пăрахнă. Паллах, тет хаçат, вĕсен тĕлĕшпе хăшпĕр тӳрлетӳсем пани кирлĕ, анчах вĕсене пачах юрăхсăр тесе шутлама çук. Усăсăр сăмах ваклас вырăнне часах тĕплĕ калаçусем пуçланĕç, тесе шанса тăмалла, тесе çырать хаçат юлашкинчен.

Патет-Лаори вăрçă ĕçĕсем

ПАРИЖ, апрелĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Франс Пресс агентствин корреспонденчĕ Ханойран пĕлтернĕ тăрăх, Патет-Лао çĕршывĕн ирĕклĕхшĕн кĕрешекен халăх çарĕн чăсĕсем Луан-Прабанран 30 километрта тăраççĕ.

ЛОНДОН, майăн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио пĕлтернĕ тăрăх, Вьетминăн (Патет-Лаори ирĕклĕхшĕн кĕрешекен халăх çарĕн.—**Ред.**) тĕп вăйĕсем король резиденцийĕ—Луан-Прабан патне çывхарса çитнĕ. Хулара осаднăй положени туни çинчен пĕлтернĕ.

Инди хаçачĕ Патет-Лаори лару-тăру çинчен

ДЕЛИ, апрелĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). «Хиндустан таймс» хаçат Патет-Лао территорийĕнче Францин колонири çарĕсен ĕçĕсем йывăрланса çитни çинчен çырать. Хаçат çапла калать: «Колониализм саманин ĕмĕрĕ иртрĕ. Франци хăй тĕнчери ĕçсене ахаль те пĕчĕк влияни кăна панине те пулин çухатас мар тет пулсан, çакна йышăннипе питĕ лайăх тунă пулĕччĕ».

«ИТАЛИЯ—СССР» ОБЩЕСТВО ÇĔНĔ ЖУРНАЛ КĂЛАРМА ТЫТĂННĂ

РИМ, майăн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Çак кунсенче «Реальта» журналăн пĕрремĕш номерĕ пичетленсе тухнă. Ăна «Итали — СССР» общество кăларса тăрать, Джулио Трелизани редакцилет.

Журналта çĕршывăн экономикăлла, политикăлла тата культурăлла пурнăçне çутатса паракан статьясем, корреспонденцисем, фотоӳкерчĕксем пичетленнĕ.

Журнал çавăн пекех Совет Союзĕнчи искусствăпа спорт çинчен çырнă.

Францире полици демонстраци çине тапăннă

ПАРИЖ, майăн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Франс Пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер Валансьенра (Нор департаменчĕ) Майăн 1-мĕшĕнче демонстраци пулнă вăхăтра полиципе демонстрантсем хушшинче тытăçусем пулса иртнĕ. Полици демонстрантсене патаксемпе хĕнеме тытăннă тата демонстрантсем çине куççуль кăларакан газсем янă. 50 çынна амантнă. Полици чылай çынсене арестленĕ.

ФРАНЦИ ПАТРИОЧĔСЕНЕ ХĔСĔРЛЕНИ

ПАРИЖ, майăн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Франс Пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Франци патриочĕсем Ле Леап, Лоран, Байо, Дюколоне, Молино тата Андрэ Стиль хăйсене вăхăтлăха тĕрмерен кăларма ыйтнă пулнă. Парижри апелляци сучĕн следстви палати çав ыйтăва тивĕçтерме килĕшмен.

АНГЛИ ВЛАÇĔСЕМ КЕНИ ÇĔРШЫВĔНЧИ НЕГРСЕМ ÇИНЕ БОМБĂСЕМ ПĂРАХАÇÇĔ

ЛОНДОН, майăн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин корреспонденчĕ Найробирен (Кени) пĕлтернĕ тăрăх, Англин колонири влаçĕсем апрелĕн 30-мĕшĕнче Кенири негрсене хирĕç бомбăсем пăрахса çапăçма тытăннă. Абердэр тăвĕсем патĕнче çар самолечĕсем 8 бомба пăрахнă.

Испанири фашистла террор

ПАРИЖ, апрелĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). «Юманите» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Франко трибуналĕ фашизма хирĕç кĕрешекен 15 баск çынни пирки приговор йышăннă. 12 çынна тĕрлĕ срока хупса лартмалла тунă, 3 çынна тӳрре кăларнă. Хаçат çакна палăртать: Франко палачĕсен террорĕ халăха ытла та хытă тарăхтарать. Çавăнпа та çак приговор çинчен халăха тăватă кун иртнĕ хыççăн тин пĕлтернĕ. Айăпланакан виçĕ çынна тӳрре кăларасси те Испани патриочĕсем фашизма хирĕç кĕрешекен паттăрсене хӳтĕленĕ пирки кăна пулма пултарнă.

Шупашкар хула Совечĕн сессийĕ

Çак кунсенче ĕçсынни депутачĕсен Шупашкар хула Совечĕн иккĕмĕш сессийĕ пулса иртрĕ. Сесси хула Совечĕн исполкомĕн ĕçĕсем çинчен исполком председателĕ **Н. Енчиков** юлташ тунă доклада сӳтсе яврĕ.

Докладчик хамăр столицăра—Шупашкарта хуçалăхпа культура строительстви пĕрмай аталанса пынине палăртса, кăçалхи задачăсемпе ĕçсем çинчен тĕплĕн каласа пачĕ. Иртнĕ çулта хулари промышленность производство планне иртерсе тултарнă, планран ирттерсе 13.823,3 пин тенкĕлĕх продукци туса кăларнă. Хула бюджетне тата поселоксен бюджечĕсене тупăшсем енĕпе пурнăçланă.

Ĕçсыннисен пурнăçна йăла условийĕсем лайăхланса пыраççĕ. Пĕлтĕр хулари промышленность предприятийĕсем, ведомствăсем тата организацисем пурăнмалли 21 пысăк çурт лартнă. Кунсăр пуçне, хулари уйрăм çынсем государство пулăшнипе хăйсем валли 178 çурт лартнă. Электростанцисен хăвачĕ, 1940 çулхипе танлаштарсан, 6 хут ытла ӳснĕ. Водопровод хывмалли плана тултарсан, унăн хăвачĕ виçĕ хут ӳсет. Çĕнĕ мунча лартнă. Коммунальнăй предприятисем планран ирттерсе 2.213,3 пин тенкĕ, çав шутра Атăл леш енчи электростанци 1.167,8 пин тенкĕ тупăш панă.

Анчах иртнĕ çулта коммунальнăй çуртсемпе предприятисем лартма панă укçан пĕр пайĕпе усă курман. Пурăнмалли çуртсене юсамалли плана тултарман.

Хула Совечĕн исполкомĕпе унăн коммунальнăй хуçалăх пайĕ строительство ĕçĕсене çителĕксĕр тĕрĕслесе тăнă. Хулари урамсене чул сарас ĕçре те çитменлĕхсем нумай, йĕпе-сапара хăшпĕр урамсене пырса кĕме çук.

Кăçал благоустройство енĕпе 1.854 пин тенкĕ расходлама палăртнă. Çав укçапа кĕперсем тумалла, урамсене чул сармалла, водопровода тата электричество линийĕсене тăсмалла, урамсене электричествăпа çутатас ĕçе лайăхлатмалла. Кăçал пурăнмалли çуртсене юсама пĕтĕмпе 670 пин тенкĕ уйăрса панă. План тăрăх хула хушшине тĕрлĕ йывăçсем 15 пин тĕп, вĕтлĕх йывăçсем 20 пин тĕмĕ лартса хăвармалла.

Иртнĕ çулта хулара тата поселоксенче çĕнĕрен 4 магазин, 3 ларек, 7 столовăй уçнă. Çапах та хулара магазинсемпе ларексем сахал-ха.

Кăçал Сосновка, Совхознăй поселоксенче апат-çимĕçпе промышленность таварĕсем сутмалли çĕнĕ магазинсем, хулара апат-çимĕç, пир-авăр, сĕтел-пукан сутакан магазинсемпе ларексем уçма палăртнă. Хулана ялхуçалăх продукчĕсем ытларах кӳрсе килес ĕçе организацилемелле.

Иртнĕ çулта торфопредприятире 10 койкăллă стационар тунă. Сосновкăра больницăн çĕнĕ çуртне туса пĕтерсе ĕçе янă. Пир-авăр комбинатĕнче тата Сосновка поселокĕнче ача яслисем уçнă.

Малалла докладчик хулари больницăсенчи çитменлĕхсене кăтартса парать. Койкăсем çитмен пирки чирлĕ çынсене пурне те больницăна выртарма май килмест. Больницăсенче оборудовани тата тĕрлĕ хатĕрсем çитмеççĕ. Сывлăх пайĕ медицина учрежденийĕсен ĕçне тăтăшах тĕрĕслесе тăмасть.

Хула Совечĕн исполкомĕ организацилле ĕçсене кирлĕ пек йĕркелеймен, хăйĕн пайĕсемпе управленийĕсен отчечĕсене пачах итлемен, аслă органсем тата хула Совечĕн сессийĕсемпе исполкомĕ йышăннă решенисем мĕнле пурнăçланса пынине начар тĕрĕслесе тăрать. 1952 çулхи июнь уйăхĕнче хула Совечĕн сессийĕ суту-илĕве лайăхлатасси çинчен решени йышăннă, анчах решенире палăртнă ĕçсем мĕнле пурнăçланса пынине исполком та, унăн суту-илӳ пайĕ те (заведующийĕ Лебедева юлташ) тĕрĕслесе тăман. Çак сăлтава пулах сывлăх учрежденийĕсен ĕçĕсенчи çитменлĕхсене пĕтересси çинчен йышăннă решенисем те пурнăçа кĕмен. Яланхи комиссисенчен хăшпĕрисем халиччен те ĕçлеме тытăнман.

Сосновка поселок Совечĕн председателĕ **С. Миронов** юлташ хула Совечĕн исполкомĕ яланхи комиссисемпе урам комитечĕсен ĕç опытне пĕтĕçтерме, вĕсен ĕçри пахă опытне сарма, организацилле-массăллă ĕçе лайăхлатма тăрăшманни çинчен каларĕ. Вăл хулари халăха вĕрентес ĕç пайĕн заведующине Семенова юлташа сакăрмĕш вăтам шкулти çитменлĕхсене пĕтерме пулăшманшăн критиклерĕ.

Ф. Дмитриева депутат хулана йывăç лартса илемлетес, пурăнмалли çуртсене юсаттарас ыйтусем çинче чарăнса тăчĕ. Вăл хула Совечĕн исполкомĕ «Родина» кинотеатрти йĕркесĕрлĕхсене пĕтерме тăрăшманнине палăртрĕ.

Хулари финанс пайĕн заведующийĕ **Е. Тарасова** депутат хулара укçа-тенкĕ мобилизацилес ĕç мĕнле пыни çинчен каласа пачĕ.

Хулари кĕпе-тумтир çĕлекен мастерскойсен тата промкомбинатăн ĕçĕсене лайăхлатма хула Совечĕн исполкомĕ сахал тăрăшни çинчен **А. Иванов** депутат каларĕ.

А. Старостин депутат хулара благоустройство енĕпе тунă ĕçсем çинчен каласа пачĕ. Вăл Базарнăй площадь патĕнчи çырмана ишĕлесрен чарма йывăçсем лартса ӳстермелле, Чебоксарка шывĕ урлă хывнă кĕперсем патĕнче çĕр ишĕлессине чарма мерăсем йышăнмалла, хулара çӳрекен автобуссен шутне нумайлатмалла, Калинин урамне çĕнĕрен чул сармалла, терĕ.

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн председателĕн заместителĕ **Д. Полукаров** депутат хула хуçалăхĕпе культура строительствине вăйлатас ыйтусем çинче чарăнса тăчĕ. Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ «Шупашкар хула Совечĕн исполкомĕн ĕçĕсем çинчен» отчет итлесе, постановлени йышăннă. Хула Совечĕн исполкомĕ çав постановление пурнăçлас тĕлĕшпе оперативлă та конкретлă ĕçлемест.

Доклад тăрăх çавăн пекех «Чăвашгражданстрой» управляющийĕ **И. Куприянов** юлташ, Чапаевски поселок Совечĕн председателĕ **С. Иванов**, яланхи суту-илӳ комиссийĕн председателĕ **О. Ковалева** тата **Н. Рыбакова** депутатсем тухса каларĕç.

Сӳтсе явнă ыйту тăрăх сесси решени йышăнчĕ.

Çĕнĕ йышши эмел

ФТИВАЗИД

Туберкулез чирĕнчен врачсем халиччен пуринчен ытла стрептомицинпа тата наскпа сыватнă. Юлашки вăхăтра совет медицини татах çĕнĕ эмел тупса пачĕ, вăл—фтивазид.

Фтивазидпа нумай çынсене сыватнă. Ку эмел туберкулез палочкисене организмра ĕрчеме чарса лартать, вара çын туберкулезран сывалать. Сăнавсем кăтартнă тăрăх, фтивазид нимрен ытла тин кăна пуçланнă туберкулеза ăнăçлă сыватать. Чир шала кайсан, сăмахран, ӳпкере пӳрлĕ хăвăлсем (кавернăсем) пулсан, вăл, стрептомицин пекех, сахал пулăшать. Кун пек чухне хирурги майĕсемпе сыватни нимрен малта тăрать.

Фтивазид, туберкулез микробĕсене (палочкисене) ĕрчеме чарса лартнисĕр пуçне, çыннăн вăй-хăватне те хăпартма пулăшать. Ăна ĕçнĕ хыççăн чирлĕ çынсем йĕркеллĕ çывăрма тытăнаççĕ, температура хăвăрт чакать, вĕсен апат лайăхланать.

Фтивазид пӳре туберкулезĕнчен сывалма та лайăх пулăшать.

Ӳпке туберкулезĕ тĕрлĕ формăллă пулать. Вĕсенчен чи йывăрри ӳпке шыçни тата туберкулез пĕтĕм ӳпкене сарăлни. Çакăн пек чухне фтивазида стрептомицинпа пĕрле парса эмеллени ăнăçлă пулни палăрнă. Фтивазид стрептомицинпа е наскпа эмелленине хирĕçлемест, нумай чухне вĕсене пĕрле парса эмеллесен, çын хăвăртрах сывалать, мĕншĕн тесен вăл эмелсем кашниех туберкулез микробĕсене пĕтерме пулăшаççĕ.

Пуç мими витĕмĕсем туберкулезпа чирлени халиччен чи хăрушă чир шутланнă. Стрептомицинпа тата наскпа эмеллеме пуçланă хыççăн, унăн хăрушлăхĕ чылай чакнă. Халĕ вăл эмелсем çумне фтивазид хушăнать. Çапла туни чиртен сыватма тата ытларах пулăшать.

Туберкулез ӳпкере кăна мар, шăмăсенче те, пырта та пулма пултарать. Шăмă туберкулезĕнчен паск ытларах пулăшать, анчах ун çумне фтивазид хушсан унăн вăйĕ татах пысăкланать. Çавăн пекех фтивазид пыр туберкулезĕнчен сывалас енĕпе те пысăк усă парать.

Фтивазид туберкулез микробĕсене кăна пĕтерме пулăшать. Туберкулез çумне ытти пӳрлĕ чирсем хутшăнсан, вăл сахал пулăшать.

Фтивазида порошок е таблетка туса кăлараççĕ, чирлĕ çынсене ăна кунне икĕ е виçĕ хутчен ĕçтереççĕ. Фтивазида ĕçнĕ хыççăн организмри органсем пăсăлни палăрман.

Фтивазид туса кăларни туберкулезпа кĕрешес ĕçре совет медицини пысăк çитĕнӳ туни пулса тăрать. Анчах туберкулезран татăклăн сывалас тесен, пĕр эмел кăна ĕçни çителĕклĕ мар. Туберкулезпа чирлĕ çынсен, эмел ĕçнипе пĕрлех, организм вăйне ытти майсемпе те хăпартса пымалла.

КУРС ЭКЗАМЕНĔСЕНЕ ПАРСА ПĔТЕРЧĔÇ

Чăваш педагогика институтĕнчи историпе филологи факультетĕнчи чăваш чĕлхипе литература уйрăмĕн IV-мĕш курсĕнче вĕренекен студентсем курс экзаменĕсене парса пĕтерчĕç.

Çак группăра 24 студент. Кăçал вĕсем институтран вĕренсе тухаççĕ. Курс экзаменĕсенче Н. Терентьев, Р. Русакова, А. Горшков студентсем пур предметсемпе те «отлично» паллăсем илчĕç. Студентсем экзаменсенче Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕн материалĕсемпе решенийĕсене, И. В. Сталинăн «СССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă гениалле произведенине пĕлни курăнчĕ.

П. СОЛОВЬЕВ.
И. ПРОКОПЬЕВ.

ХРОНИКА

СССР Верховнăй Совет Президиумĕ Иван Александрович Бенедиктов юлташа Совет Союзĕн Индири Чрезвычайнăй тата Полномочнăй Посолĕ пулма уйăрса лартнă.

* * *

СССР Верховнăй Совет Президиумĕ Кирилл Васильевич Новиков юлташа, вăл урăх ĕçе кусnă пирки, Совет Союзĕн Индири Чрезвычайнăй тата Полномочнăй Посолĕн ĕçĕсенчен хăтарнă.

Редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителĕ—3-99, ответлă секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—5-74, парти пурнăç пайĕ—3-99, ялхуçалăх пайĕ—3-97, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—8-61, çырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 01114 Типографи № 1 Чăвашполиграфиздата. Тираж 80.000 экз.